Чувашская республиканская библиотека

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул февраль 22
ЭРНЕКУН
№ 38 (8690)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

ВКП(б) ЧАВАШ ОБКОМĔН IX-мĕш ПЛЕНУМĔ. Колхозсенчи парти организацийĕсен ĕçĕсене лайăхлатмалли майсем çинчен (2—3 стр.).

Колхоз председателĕсен республикăри канашлăвĕ (1 стр.).

ХАМĂР РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ: И. Еремин. — Çĕнĕ юхăм анлă сарăлать; М. Александров.—Иккĕмĕш премии илме тивĕçлĕ пулнă; Г. Иванов.—Малта пыракан механизаторсен пуçарăвĕпе (1 стр.).

Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул тултарнă тĕле (1 стр.).

А. Гусев.—Ленин—Сталин партийĕ—Совет Çарĕн çĕнтерĕвĕсен организаторĕ (3 стр.).

Демократиллĕ Германи Республикин Правительстви СССР, США, Великобритани тата Франци Правительствисене чĕнсе каланă пирки Совет Правительстви панă ответ (4 стр.).

Лиссабонра Çурçĕр Атлантика союз совечĕн сессийĕ уçăлнă (4 стр.).

Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Корейăри вăрçă çинчен Англи салтакĕ каласа пани (4 стр.).

Тунисри ĕçсем (4 стр.).

Колхозсенчи пуçламăш парторганизацисене ертсе пырассине лайăхлатмалла

Паян пирĕн хаçат ВКП(б) Чăваш обкомĕн IX-мĕш пленумĕн материалĕсене пичетлеме тытăнать.

Колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен ĕçĕсене лайăхлатмалли майсем çинчен обком пленумĕ йышăннă решенин пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк. Унта ВКП(б) Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви пирĕн республика умне лартнă пысăк задачăсене ăнăçлă пурнăçлама чи кирлĕ майсене кăтартса панă.

Юлашки икĕ çул хушшинче, пĕчĕк артельсене пĕрлештернĕ хыççăн, колхозла ялта тата унти парторганизацисен пурнăçĕнче пысăк улшăнусем пулчĕç. Пĕрлешсе пысăкланнă колхозсем тырпул тухăçлăхне, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне хăвăртрах ÿстерме пуçларĕç, организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен нумай çирĕпленчĕç. Çакă вăл колхозсенчи парторганизацисен кĕрешÿри пултарулăхĕ вăйланнинчен, вĕсем партиллĕ-организациллĕ тата политикăллă ĕçсене лайăхлатнинчен килчĕ. Хальхи вăхăтра республикăри хăшпĕр колхозсенче кăна пуçламăш парторганизацисем туман. Ялти коммунистсенчен пысăкрах пайĕ колхоз производствин чи кирлĕ отраслĕсенче ĕçлет. Чылай парторганизацисем, хăйсен вăйĕсене тĕрĕс вырнаçтарса, уй-хир бригадисенче, выльăх-чĕрлĕх фермисенче партгруппăсем турĕç. Çапла вара колхоз хуçалăхĕн пур участокĕсенче те партиллĕ ĕç вăйланса пырать.

Анчах чылай колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен ĕçĕсем ку чухнехи задачăсен çÿлĕшĕнче тăмаççĕ-ха. Нумай парторганизацисем партиллĕ-политикăллă ĕçе хуçалăх ĕçĕсемпе тачă çыхăнтарса пымаççĕ, колхоз правленийĕсен ĕçне тĕрĕслемелли правăпа çителĕксĕр усă кураççĕ. Колхоз производствин пур ыйтăвĕсемпе те тĕплĕ интересленмен пирки, уйрăм парторганизацисем колхоз пурнăçĕшĕн питех те кирлĕ ыйтусене—çĕрĕç культурине, тырпул тухăçлăхне, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ÿстерес, техникăллă культурăсем акса тăвас, колхозри тĕрлĕ отраслĕсене вăйлатас, ялхуçалăх артелĕн Уставне çирĕп пурнăçласа пырас ыйтусене манăçа хăвараççĕ.

Çавнашкал çитменлĕхсем вĕсем парти райкомĕсем колхозсенчи пуçламăш парторганизацисене çителĕксĕр ертсе пынă пирки пулаççĕ. Чылай райкомсем пуçламăш парторганизацисене çирĕплетес, вĕсен ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе кирлĕ чухлĕ тăрăшмаççĕ, парторганизацисен пахă опытне начар сарса пыраççĕ. Райкомсен секретарĕсем, бюро членĕсем тата пайсен заведующийĕсем парторганизацисенче пулаççĕ пулин те, унта сахал пурăнаççĕ, вĕсен ĕçне тĕпĕ-йĕрĕпе тишкерсе тухмаççĕ, парторганизаци секретарĕсене партиллĕ ĕçе лайăхлатма çителĕксĕр пулăшаççĕ. Час-часах çапла та пулать: колхозри парторганизацисене куллен ертсе пырас вырăнне вĕсем, тĕрлĕ решенисем нумай йышăнаççĕ, анчах çав решенисене ялти коммунистсем патне çитермеççĕ, Организаторла ĕç çÿлĕ пусăмра тăмасть. Йышăннă решенисене пурнăçланине тăтăш тĕрĕслени çук.

Колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем тулли пурнăçпа пурăнасси, пуринчен малтан, парторганизаци секретарĕсен пултарулăхĕнчен килет. Анчах секретарьсене вĕрентсе ÿстерес тата воспитани парас ĕç ытла та çителĕксĕр пулса пырать. Секретарьсен виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ пуçламăш шкулсенче кăна вĕреннĕ. Вĕсене чăтăмлă, куллен вĕрентес тата вĕсен ĕç квалификацине ÿстерес вырăнне, хăшпĕр райкомсем тĕрĕс мар çул çине тăнă: парторганизаци секретарĕсем пулма нумайтарах вĕреннĕ, анчах колхоз производствипе пачах çыхăнман коммунистсене лартаççĕ. Парти райкомĕсем секретарьсене, партгруппа руководителĕсене инструктаж парассине те кирлĕ пек туса пымаççĕ.

Райкомсем çителĕксĕр ертсе пынине пула ĕнтĕ чылай пуçламăш парторганизацисенче парти пухăвĕсене тăтăш ирттермеççĕ, вĕсенче ытларах çÿлтен кăтартса панă ыйтусене çеç сÿтсе яваççĕ, критикăпа самокритикăна сарса пымаççĕ, коммунистсене пурне те парти ĕçне хутшăнтармаççĕ. Чылай райкомсем, уйрăмах Муркаш, Кувакино, Улатăр, Красноармейски, Элĕк райкомĕсем малта пыракан колхозниксене партие илес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕç те çителĕксĕр. Колхозсенчи парторганизацисенчи мĕнпур кандидатсенчен 75 проценчĕн кандидатра тăмалли стаж иртсе кайнă. Сĕнтĕр, Етĕрне, Куславкка районĕсенчи парторганизацисенче ялти коммунистсен тата колхоз кадрĕсен марксистла-ленинла вĕренĕвне тивĕçлипе йĕркелемен. Чылай кружоксемпе шкулсенче занятисем йĕркеллĕ пулмаççĕ, вĕренÿ программине пурнăçламаççĕ, занятисене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра ирттермеççĕ, вĕсене коммунизм строительствинчи конкретлă ĕçсемпе çыхăнтармаççĕ. Шупашкар, Елчĕк, Чурачăк районĕсенчи нумай агитколлективсем ĕçлемеççĕ, политикăллă-массăллă ĕçе хуçалăхпа политикăллă задачăсемпе çыхăнтармаççĕ. Уйрăмах правлени вырнаçнă ялтан инçеререхри уй-хир бригадисенче, фермăсенче ĕçлекенсем хушшинче политикăллă ĕç начар пулса пырать. Парти организацийĕсем колхозницăсем хушшинче уйрăмах тимлĕ ĕçлеме кирлине манаççĕ.

ВКП(б) Чăваш обкомĕн IX-мĕш пленумĕ парти райкомĕсене колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен ĕçне тата вĕсене ертсе пырассине лайăхлатма хушрĕ. ВКП(б) райкомĕсемпе колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен хальхи чи кирлĕ задачи вăл—мĕнпур коммунистсене, колхозниксене тата ялхуçалăх специалисчĕсене ВКП(б) Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви пирĕн республика умне кăларса тăратнă задачăсене ăнăçлă пурнăçлама мобилизацилесси пулать. Çавăн пек тăвас тесен, пуринчен малтан, колхозсенчи парторганизацисенче партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçсене çÿлĕ пусăма çĕклени, коммунистсен активлăхĕпе пуçарулăхне вăйлатни, колхоз производствинче вĕсен рольне ÿстерни, коммунистсене пурне те обществăллă-политикăллă ĕçе хутшăнтарни кирлĕ. Колхозри ĕçсемшĕн парторганизацисен ответлăхне ÿстерес пулать: вĕсем партиллĕ-политикăллă ĕçе хуçалăх ĕçĕпе тачă çыхăнтарччăр, колхоз правленийĕсен ĕçне тĕрĕслемелли правăпа туллин усă курччăр. Колхозсенчи парторганизацисен, коммунистсен тивĕçĕ—колхоз экономикине тĕплĕ пĕлесси, артелĕн обществăллă хуçалăхне малалла аталантарас ĕçре хăйсен пуçарулăхне анлă палăртасси пулать.

Ялти коммунистсен политикăллă тата производствăллă активлăхĕ пысăк пуласси парторганизацин шалти ĕçĕ вăйлă пулнинчен килет. Парти членĕсемпе кандидачĕсене большевикла воспитани парас ĕçре парти пухăвĕсен пĕлтерĕшне ÿстермелле. Вĕсенче коммунистсем ĕçри çитменлĕхсене большевикла усса палăртма пултарччăр, критикăпа самокритикăна анлă сарса, хуçалăхпа культура строительствинчи тата партиллĕ-политикăллă ĕçсенчи çитменлĕхсене хăюллăн кăтартса пама пултарччăр.

Парторганизаци секретарĕсене вĕрентес, воспитани парас тата вĕсен ĕç квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе парти комитечĕсен нихçанхинчен те тимлĕрех ĕçлемелле. Парти райкомĕсен бюровĕсенче, пленумĕсенче, семинарсенче парторганизаци секретарĕсен отчечĕсене час-часах итлени кирлĕ. Çакă вăл парторганизацисен пахă опытне пĕтĕçтерсе сарса пыма пулăшать. Секретарьсен семинарĕсене, канашлăвĕсене тăтăш ирттерес, вĕсенче кадрсене инструктаж памалла, парти ĕçне туса пыма вĕрентмелле, теори тата парти строительствин уйрăм ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем ирттермелле.

Колхоз производствинче малта пыракан, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн кĕрешсе хăйсене палăртнă колхозниксене партие илессине вăйлатас пулать. Парти организацийĕсен партире тăман активпа тачă çыхăнмалла, ăна обществăллă тата политикăллă ĕçе хăюллăн хутшăнтармалла. Парторганизацие колхозниксем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетес тĕлĕшпе уй-хир бригадисенчи, фермăсенчи тата хуçалăхăн ытти отраслĕсенчи партгруппăсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Парти райкомĕсем тата пуçламăш парторганизацисем партгруппăсен хисепне ÿстерме тăрăшас пулать. Кунпа пĕрлех парти органĕсен группăсен руководителĕсене вĕрентес тата воспитани парас, вĕсене колхозниксем хушшинче организаторла тата политикăллă ĕçсене йĕркелеме вĕрентес ыйтусене манăçа хăвармалла мар.

Парти комитечĕсемпе пуçламăш парторганизацисен коммунистсемпе колхоз кадрĕсен марксистла-ленинла вĕренĕвне организацилес ĕç çине тимлĕрех пăхас пулать. Колхозсенче лекциллĕ пропагандăна вăйлатни кирлĕ. Партин ертсе пыракан работникĕсен, колхозниксем хушшинче тăтăшах пулса, вĕсене политикăллă докладсем туса памалла, агитколлективсене, агитаторсене ĕçе тĕрĕс йĕркелеме пулăшмалла.

Республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, механизаторсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем Сталин юлташ патне янă çырура çĕрĕç культурине ÿстерме, çĕнĕ техникăна лайăх усă курма, çавна май кăçал пур культурăсем тăрăх та вăйлă тырпул туса илме, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне хăвăрт ÿстерме, колхозсен обществăллă пуянлăхне пысăклатма пулса обязательствăсем йышăнчĕç. Колхозниксен, механизаторсен ăмăртăвĕн малти ретĕнче тăрса, вĕсен политикăллă тата производствăллă хастарлăхне пуçарса пырасси парти организацийĕсен чысла тивĕçĕ пулса тăрать.

Хамăр республика тăрăх

Совет Çарĕн кунĕ умĕн

ВĂРНАР. Каганович ячĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсем Совет Çарĕ 34 çул тултарнине паллă тума хатĕрленеççĕ. Колхозниксем хушшинче Совет Çарĕн организаторĕсем В. И. Ленинпа И. В. Сталин çинчен тата граждан вăрçипе Аслă Отечественнăй вăрçă геройĕсем çинчен каласусем ирттереççĕ.

Çак кунсенче Отечественнăй вăрçă участникĕ Н. Игнатьев Берлина илнĕ чухнехи çапăçусем çинчен каласу ирттерчĕ.

Ялти клубра «Совет Çарĕ—социализм çĕршывĕн шанчăклă хуралçи» ятлă фотовитрина тата Совет Çарĕ çинчен çырнă кĕнекесен выставки тунă.

Пултарулăх кружокĕн членĕсем февралĕн 23-мĕшĕнче концерт пама хатĕрленсе çитнĕ.

Досааф членĕсем хушшинче пăшалтан тĕл перекенсен ăмăртăвĕ пырать. Ăмăртăва колхозри нумай çамрăксем хутшăннă.

Е. ЗАХАРОВ.

Çĕнĕ юхăм анлă сарăлать

ВКП(б) Улатăр хула комитечĕн бюровĕ Кавашри вагонсем юсакан заводри стахановецсем сменăри задание 7 сехетре с тата хăвăртрах тултарассишĕн социализмла ăмăрту пуçарса яни çинчен кăларăвĕнче сÿтсе яврĕ. Вăл патриотла çĕнĕ пуçарăва ырларĕ, промышленноçпа транспорт предприятисенчи парторганизацисене ун çинчен рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене анлă ăнлантарса пама хушрĕ.

Хулари рабочисем çĕнĕ юхăма активлă хутшăнчĕç. Уйрăмах шăрçаруссем юсакан завод коллективĕн пахă тĕслĕхĕсене палăртас пулать. Тимĕрçĕ цехĕнче ĕç вырăнне ăлăххинчен пахарах хатĕрлеме, оборудование лайăхрах пăхса усрама тытăннă. Пĕр сменăри рабочисем тепĕр смена валли тухăçлă ĕçлеме мĕн кирлине пурне те тăваççĕ. Нумай тимĕрçĕсем, рессорщиксем тата прессовщиксем сменăри задание 7, 6 е 5 сехетре пурнăçлама социализмлă обязательство йышăннă.

Рабочисем хăйсен сăмахне чыслă пурнăçлаççĕ. Февралĕн 7-мĕшĕнче Гришин рессорщик 6 сехетре 8 рессор туса хатĕрленĕ. Норма тăрăх 8 сехетре 6 рессор тумалла. Смена вĕçленичченех вăл тата 4 рессор тунă. Урăхла каласан, вăл сменăри задание икĕ хут ирттерсе тултарнă. Çак кунсенче те вăл ĕç нормине тăтăш ирттерсе тултарать.

Февралĕн 7-мĕшĕнче Шуйкин тимĕрçĕ ĕç нормине 379 процент тултарнă. Болтсем тăвакан Казаков юлташ ĕç нормине 3 хута яхăн, Белоусова прессовщица — икĕ хут ытла, Балалаина Сидоров тимĕрçĕсем—икĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Тимĕрçĕ цех коллективĕ тимĕре перекетлессишĕн те тимлĕ кĕрешет. Эрне хушшинче А. Ренова прессовщица 120 килограмм, А. Рысин тимĕрçĕ—122 килограмм, А. Балаилин тимĕрçĕ—130 килограмм, А. Гольвин тимĕрçĕ—175 килограмм тимĕр перекетленĕ.

Атă-пушмак фабрикинчи отделочнăй участок коллективĕ çак кварталта I-мĕш сорт продукци планран ирттерсе 2.300 мăшăр туса кăларма, сменăри задание 7 сехетре пурнăçлама сăмах панă. Смена коллективĕ илнĕ обязательствăна чыслă пурнăçласа пырать.

Махорка фабрики коллективĕ пĕтĕмĕшпе сменăри задание 7 сехетре пурнăçлама пулнă.

И. ЕРЕМИН.

Иккĕмĕш премии илме тивĕçлĕ пулнă

СССР Çĕр кăмрăк министерствин предприятийĕсем хушшинчи Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура Куславккари пурăнмалли çуртсем тăвакан завод коллективĕ малти ретре пырать. Çак кунсенче заводри рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем савăнăçлă хыпар пĕлчĕç: хастарлă ĕçшĕн завод коллективне 1951 çулхи IV-мĕш квартал итогĕсем тăрăх иккĕмĕш премии—130 пин тенкĕ укçа памалла тунă.

Ку премии завод коллективне тата хастартарах ĕçлеме хавхалантарать. Цехсем хушшинчи социализмлă ăмăртура хăма çуракан цех малта пырать. Хăма çуракансем февраль уйăхĕнчи плана виçĕ кун маларах тултарма, ĕç тухăçлăхне январь уйăхĕнчипе танлаштарсан, 3 процент ÿстерме, пысăк пахалăхлă продукци пама, хăма çуракан рамăсемпе тухăçлăн ĕçлеме сăмах пачĕç.

Цех коллективĕ хăйĕн сăмахне чыслă пурнăçлать. Уйрăмах А. Феофанов, М. Матюшкин коммунистсем ертсе пыракан сменăсем хастарлă ĕçлеççĕ. Вĕсем куллен планран ирттерсе 30—50 кубометр хăма çурса хатĕрлеççĕ.

Çуртсем тăвакан цехра Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ М. Филиппова станочница хăйĕн стахановла ĕçĕпе палăрса тăрать. Малта пыракан меслетсемпе ĕçлесе вăл кулленхи задание 300 процент таран тултарать. Вăл туса кăларакан продукци — пĕтĕмпех пĕррем́ĕш сорт. Щитсем пухакансем А. Гусев, Н. Михайлов, Н. Никитин юлташсем те кулленхи нормăна 150—160 процент таран тултарса ĕçлеççĕ.

Столярсен цехĕнче хастарлă ĕçлекенсенчен К. Андреянов сборщика, А. Манюков столяра, А. Трофимова фрезеровщицăна палăртмалла. Иртнĕ уйăхри ĕç итогĕсем тăрăх вĕсене «хăйĕн профессине лайăх пĕлекен» рабочисен ятне панă.

Юсавпа механически цехĕ те начар мар ĕçлет. Вăл январь уйăхĕнчи производство планне 12,5 процент ирттерсе тултарнă. К. Тухланов токарь, Н. Баганов строгальщик, Б. Гизатулин слесарь кулленхи задание 200 процент тата ытларах та тултарса пыраççĕ, материалсем нумай перекетлеççĕ.

М. АЛЕКСАНДРОВ.

Малта пыракан механизаторсен пуçарăвĕпе

ШĂМĂРШĂ. (Телефонпа). Республикăра малта пыракан механизаторсен чĕнĕвне сÿтсе явнă хыççăн, МТС-ра ĕçлекенсен коллективĕ тракторсемпе тухăçлă ĕçлессишĕн, МТС-ри мĕнпур резервсемпе туллин усă курассишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнма йышăнчĕ. МТС коллективĕ çакăн пек обязательство илчĕ: кашни 15 лашалла вăйлă трактор пуçне 550 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тумалла, самоходнăй комбайнпа 300 гектартан кая мар тырпул пуçса кĕртмелле; горючие тата юсавра пулакан ĕçсенче укçа-тенкĕне 5 процент перекетлемелле, тракторпа тăвакан ĕçсен хăйне ларакан хакне кашни гектар пуçне планпа пăхнинчен 1 тенкĕ те 10 пус чухлĕ йÿнетмелле.

Ĕçе лайăхлатмалли майсене тĕплĕ пăхса тухнă хыççăн, уйрăм бригадăсем пысăкрах обязательствăсем илчĕç. И. Тухтаров юлташ ертсе пыракан трактор бригади 1951 çулта кашни 15 лаша вăйлă трактор пуçне 750 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă. Трактористсем кăçал 15 лаша вăйлă трактор пуçне 800 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тума, кашни вунă кун ирттерсен пĕр кун хушши перекетленĕ горючипе ĕçлеме, юсав ĕçĕнчи расходсене 10 процент йÿнетме йышăнчĕç. Çакăнпа пĕрлех механизаторсем мĕнпур ĕçе лайăх тума, уй-хир бригадисемпе тачă çыхăнса ĕçлесе, Жданов ячĕпе тăракан тата «Слава» колхозсенче кашни гектартан 15-шер центнертан кая мар тырпул туса илме сăмах параççĕ.

Г. Гаранин юлташ бригадинчи трактористсем «Гвардеец» колхозра кашни гектартан 15 центнертан кая мар тĕштырă туса илессишĕн социализмла ăмăртса ĕçлеме пулчĕç. Бригада кашни 15 лаша вăйлă трактор пуçне 800 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тума, юсав ĕçĕсенче 8.000 тенкĕ перекетлеме обязательство илчĕ.

Лайăх ĕçлекен комбайнерсен примерĕ тăрăх, П. Акимов комбайнер самоходнăй комбайнпа 375 гектар тырпула пĕр тăкаксăр, вĕçке срокра пуçса кĕртме, 1.000 тенкĕ укçа перекетлесе хăварма пулчĕ.

Обязательствăсене чыслă пурнăçлас тесе, МТС-ра ĕçлекенсем çуракине тĕплĕ хатĕрленме, тракторсемпе ытти ялхуçалăх машинисене хăвăртрах тата лайăх юсаса пĕтерме тăрăшаççĕ. Ку таранччен чылай бригадăсенчи тракторсене пурне те юсаса çитернĕ. МТС коллективĕ мартăн 1-мĕшĕччен мĕнпур тракторсене юсаса пĕтерессишĕн кĕрешет.

Г. ИВАНОВ,
МТС директорĕ.

Квартал планне срокчен тултарассишĕн

ИШЛЕЙ. Районти предприятисемпе промысла артелĕсенче кварталти производство планне срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăрту вăйланса пырать. Кавашри вагонсем юсакан заводри стахановецсен пахă пуçарăвне ырласа, рабочисемпе артель членĕсем сменăри нормăна 6—7 сехет хушшинче тултарассишĕн, планран ирттерсе лайăх пахалăхлă продукци туса кăларассишĕн тăрăшаççĕ.

Сюктерти вăрман комбиначĕ 1951 çулхи итогсем тăрăх ВЦСПС-па СССР Çăмăл промышленноçть министерствин III-мĕш премине илме тивĕçлĕ пулнă. Кăçалхи январь планне те вăл 113 процент тултарчĕ. Канашсен примерĕ тăрăх халĕ комбинат цехĕсенче сменăри нормăна кашни рабочи ирттерсе тултарассишĕн ăмăрту пуçланчĕ. Столярсем Н. Амбросов, Ю. Волков, П. Волков кулленхи нормăна 5—6 сехет хушшинче пурнăçлаççĕ. Чи лайăх продукци туса кăларакан токарь Е. Евдокимовпа аслă машинист И. Трофимов февраль уйăхĕнче кашни кунах нормăна 7 сехет хушшинче тултараççĕ, нормăран ирттерсе продукци туса кăлараççĕ.

Мăмăшри промартель коллективĕ январьте 221.400 тенкĕлĕх продукци кăларса уйăх планне 213 процента яхăн тултарчĕ. Февраль планне те вăл сур уйăхрах ирттерсе тултарчĕ.

Чакаларти инвалидсен «Красный стрелок» артелĕ, çавăн пекех Ишекри, Атăлăлĕнчи промартельсем те плана ăнăçлă тултарса пыраççĕ. Вĕсем Совет Çарĕ 34 çул тултарнине производствăллă çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илеççĕ.

Х. ЛИСИН.

Колхоз председателĕсен республикăри канашлăвĕ

Февралĕн 20—21-мĕшĕсенче Шупашкарта республикăри колхоз председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура çавăн пекех ВКП(б) райком секретарĕсем тата районсенчи ялхуçалăх пайĕсен заведующийĕсем пулчĕç. Канашлу ĕçне Мордва АССР представителĕсем хутшăнчĕç.

Канашлу тăвăллăн алă çупса хисеплĕ президиума ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн аслă Сталин ертсе пыракан Политбюро составне суйларĕ.

Канашлу «Ялхуçалăхĕн иртнĕ çулхи итогĕсем тата 1952 çулхи задачăсем çинчен» Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕ **И. А. Афанасьев** юлташ тунă доклада сÿтсе яврĕ.

Прениpe доклад тăрăх çак юлташсем тухса каларĕç: **Шишкин**—Канаш районĕнчи «Красный Октябрь» колхоз председателĕ, **Кузьминская**—Çĕрпÿри аратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен рассадник директорĕ, **Григорьев**—Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхоз председателĕ, **Долгов**—Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз председателĕ, **Моисеев**—Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхоз председателĕ, **Елкин**—Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствин главнăй зоотехникĕ, **Степанов**—Ишлей районĕнчи «За коммунизм» колхоз председателĕ, **Лукьяненко**—Çĕрпÿри селекци станцийĕн директорĕ, **Львов**—Канаш районĕнчи «Канаш» колхоз председателĕ, **Осипов**—ВКП(б) Мордва обкомĕн секретарĕ, **Тимофеева**—Первомайски районĕнчи Шверник ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, **Кирпичов** — ВКП(б) Çĕрпÿ райкомĕн секретарĕ, **Мартынов** — Чăваш АССР Ялхуçалăх министрĕ, **Ульянов**—Элĕк районĕнчи «Динамо» колхоз председателĕ, **Костин**—ялхуçалăх снабженин Чăваш кантурĕн управляющийĕ, **Яблонский**—Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз председателĕ, **Старухин**—СССР Правительстви çумĕнчи колхоз ĕçĕсен Совечĕн Чăваш республикинчи представителĕ, **Зайцев**—Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, **Ефимова** — Чăваш АССР Сывлăх министрĕ, **Анисимов**—Мордва АССР-ĕнчи Ардат районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, **Владыкин**—Чăваш Ялхуçалăх институчĕн доценчĕ, **Григорьев**—Шупашкар районĕнчи «Красный флот» колхоз председателĕ, **Шманов**—ВКП(б) Чăваш обкомĕн секретарĕ, **Сергеев**—Чăваш АССР Ялхуçалăх министрĕн заместителĕ.

Канашлу пысăк çĕкленÿпе халăхсен аслă çулпуçĕ И. В. Сталин юлташ патне çыру яма йышăнчĕ. Ку çырура пирĕн республикăри колхозсемпе МТС-сем 1952 çул валли йышăннă конкретлă социализмлă обязательствăсене палăртнă.

Канашлу Мордва АССР представителĕсем тăванла Мордва республикинчи ялхуçалăх ĕçченĕсемпе социализмла ăмăртса ĕçлеме чĕннине йышăнчĕ, çавăн пекех Мари АССР-ĕпе малалла та ăмăртса ĕçлеме йышăнчĕ.

Канашлу хупăнас умĕн ВКП(б) обком секретарĕ **Т. А. Ахазов** юлташ сăмах тухса каларĕ.

Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул тултарнă тĕле

ÇĔРПУ. Вырăссен аслă писателĕ Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул тултарнă куна паллă тума хатĕрленсе районти культурăпа çутĕç учрежденийĕсем пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ.

Маленков ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсемпе çамрăксем Н. В. Гоголь çырнă кĕнекесен витринине турĕç. Колхозра Гоголь произведенийĕсене вулакансен хисепĕ чылай ÿснĕ.

«Цивильстрой» колхозри библиотекăран кĕнеке илсе вулакансен йышĕ куллен ÿссе пырать. Вулав çуртĕнче мартăн 4-мĕшĕнче Гоголĕн «Тарас Бульба» произведенийĕ тăрăх вулакансен конференцийĕ пулать.

Мичурин ячĕпе тăракан колхозри çамрăксем Н. В. Гоголь ячĕпе литература касĕ ирттереççĕ. Вырăс чĕлхипе литература преподавателĕ Ю. В. Васильева «Вырăссен аслă писатель-реалисчĕ Николай Васильевич Гоголь» тема тăрăх доклад тăвать. Колхозри драмкружок Гоголь произведенийĕсем тăрăх пĕчĕк инсценировкăсем хатĕрлет, писателĕн произведенийĕсене лайăх вуласа паракансен конкурсĕ пулать.

Педагогика училищинче вĕренекенсем «Ревизор» комедие лартса параççĕ. Районти культура çуртĕ çумĕнчи драмкружок «Женитьба» пьеса лартса пама хатĕрленет.

М. ВОРОТНИКОВ,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

ШĂХАСАН. Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул тултарнине паллă тума хатĕрленсе Ушанарти çичĕ çул вĕренмелли шкулта аслă писателĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен докладсемпе каласусем ирттереççĕ. Классенче ятарласа стена хаçачĕсем кăларнă.

Литература кружок членĕсен вăйĕпе колхоз клубĕнче литература касĕ ирттерме палăртнă. Унта Н. В. Гоголь пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен доклад пулать, вĕренекенсем унăн произведенийĕсенчи хăшпĕр сыпăксене, Гоголь çинчен хăйсем çырнă сăвăсене вуласа пама хатĕрленеççĕ.

Ятарласа «Пирĕн сас» журналăн черетлĕ номерне кăларнă.

Г. ЛУЧ.

* * *

Шупашкарти Максим Горький ячĕпе тăракан Центральнăй библиотекăра «Николай Васильевич Гоголь—вырăссен аслă писателĕ» тема тăрăх кĕнекесемпе тĕрлĕ ÿкерчĕксен выставки тунă. Унта В. И. Ленинпа И. В. Сталин Гоголь çинчен каланисем, Гоголĕн чăвашла куçарса кăларнă кĕнекисем пур.

Библиотека работникĕсем Н. В. Гоголь произведенийĕсем тата писателĕн творчестви çинчен лекци хатĕрленĕ. Çав лекцие хулари предприятисемпе учрежденисенче вуласа параççĕ. Март уйăхĕн пуçламăшĕнче библиотекăра «Н. В. Гоголь тата чăваш литератури» тема тăрăх литература касĕ ирттереççĕ.

В. КОНДРАШОВА.

* * *

Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул тултарнине паллă тума хатĕрленсе, Чăваш Государство Академи театрĕ аслă писателĕн вилĕмсĕр произведенине—«Ревизор» комедие лартса пама тытăнчĕ.

Çак пьесăна кăçалхи сезонта февралĕн 16-мĕшĕнче пĕрремĕш хут кăтартрĕç. Спектакле Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Л. Родионов хатĕрленĕ.

Городничий рольне Б. Марков артист, Хлестаков рольне РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ, Чăваш АССР халăх артисчĕ Б. Алексеев выляççĕ.

Пионерсен слечĕсенчен

ШĂХАСАН. Çак кунсенче пионерсен районти слечĕ пулса иртрĕ. ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Никитин юлташ слет участникĕсене пионерсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен каласа пачĕ.

Ун хыççăн чылай пионерсем хăйсен вĕренĕвĕ çинчен тухса каларĕç, шкулти пионер организацийĕн ĕçĕпе паллаштарчĕç.

Слетра шкул коллективĕсем хăйсен художествăллă пултарулăхне кăтартса пачĕç.

Слетра пулнисем шкулта тата лайăхрах тăрăшса вĕренме, совет пионерĕн чыслă ятне çÿлте тытма сăмах пачĕç.

* * *

ПЕРВОМАЙСКИ. Кунта нумаях пулмасть ВЛКСМ райкомĕ пионерсен районти слетне ирттерчĕ. Слетра «Эпир çамрăк ленинецсем» тема тăрăх ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ П. Степанов юлташ доклад туса пачĕ. Слета районти шкулсенче вĕренÿре малта пыракан 200 пионера яхăн пуçтарăннă.

Пионерсем слетра хăйсем мĕнле вĕренни çинчен каласа пачĕç, художествăллă пултарулăх кружокĕсен ĕçне кăтартрĕç.

А. ТУНМАНОВ.

ВКП(б) Чăваш обкомĕн IX-мĕш пленумĕ

КОЛХОЗСЕНЧИ ПАРТИ ОРГАНИЗАЦИЙĔСЕН ĔÇĔСЕНЕ ЛАЙĂХЛАТМАЛЛИ МАЙСЕМ ÇИНЧЕН

ВКП(б) Чăваш обкомĕн февралĕн 18—19-мĕшĕсенче пулса иртнĕ IX-мĕш пленумĕн кун йĕркинчи малтанхи ыйту тăрăх—колхозсенчи парти организацийĕсен ĕçĕсене лайăхлатмалли майсем çинчен—ВКП(б) *обкомĕн секретарĕ* **Н. А. Шмаков** юлташ доклад туса пачĕ.

— Пуçламăш парторганизацисем, — тет Шмаков юлташ,—пирĕн партин никĕсĕ пулса, партин ертсе пыракан органĕсене ĕçсыннин массисемпе—рабочисемпе, колхозниксемпе, интеллигенципе çыхăнтарса тăраççĕ, вĕсене большевиксен партийĕпе Совет правительстви тавра пĕтĕçтереççĕ, умра тăракан хуçалăхла-политикăллă задачăсене пурнăçлама мобилизацилеççĕ. Партин пуçламăш организацийĕсенче коммунистсем большевикла воспитани илеççĕ, парти политикипе практикин ыйтăвĕсене сӳтсе явас тата татса парас ĕçе хутшăнаççĕ, парти решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Пĕчĕк колхозсене пĕрлештернĕ май колхозсенчи нумай пуçламăш парторганизацисем организациллĕ ĕçсем енчен тĕрекленчĕç, вĕсем нумай йышлă организацисем пулса тăчĕç, хăйсен кĕрешӳ пултарулăхне чылай ӳстерчĕç. Коммунистсен пысăк пайĕ колхоз производствин ответлă участокĕсенче ĕçлет.

ВКП(б) райкомĕсем юлашки вăхăтра парти групписем тăвасси çине тимлĕрех пăхма пуçларĕç. Колхоз производствин ĕçе татса паракан участокĕсенче — уй-хир бригадисемпе выльăх-чĕрлĕх фермисенче парти групписем 135 тунă.

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан тата Свердлов ячĕпе тăракан колхозсенчи, Калинино районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри парти организацийĕсенче парти групписем организаторла пысăк ĕçсем туса пыраççĕ.

Елчĕк районĕнчи Свердлов ячĕпе тăракан колхозри тăваттăмĕш уй-хир бригадинчи парти группинче ВКП(б) членĕсем ултă çын тăраççĕ. Вĕсем пурте бригадăра ĕçлеççĕ. Çак партгруппăра (парторгĕ Козлов юлташ) пухусем вăхăтра ирттереççĕ, коммунистсем колхозниксем хушшинче куллен политикăллă-массăллă ĕç туса пыраççĕ, вĕсем социализмлă ăмăртăва пуçараканĕсем пулса тăраççĕ, колхозниксем хушшинче ĕç дисциплинине тĕреклетессишĕн, мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене пысăк пахалăхпа иртересси шĕн активлă кĕрешеççĕ. Тырпул пуxса кĕртнĕ вăхăтра коммунистсем бригада участокĕнче тырпул нумай тăкаласса хăварнине палăртнă. Вĕсем çак ыйтăва коммунистсен пухăвĕнче сӳтсе явнă, тăкаланчăка пĕтерес тĕлĕшпе çавăнтах тивĕçлĕ мерăсем йышăннă. Партгруппа лайăх ĕçленипе бригада пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ, ăмăртура пĕррĕмĕш вырăн йышăннă. Хальхи вăхăтра çуракине хатĕрленнĕ май, бригада вăрлăха сортласа пĕтернĕ, ялхуçалăх машинисене юсаса çитернĕ, уй-хире тислĕк кăлараççĕ.

Докладчик колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен секретарĕсене суйласа илес, вĕсене воспитани парас, парти пухăвĕсем иртерес ыйтусем çинче тĕплĕ чарăнса тăрать. Çакăнпа пĕрлех вăл уйрăм райкомсем пуçламăш парторганизацисене производствăллă йĕрке тăрăх тăвас, партие çĕнĕ членсем илес, çамрăк коммунистсене воспитани парас, парти бюровĕсен ĕçне ертсе пырас, пуçламăш парторганизацисен секретарĕсене суйласа илес тата вĕсене воспитани парас, парти пухăвĕсем иртерес ĕçе çителĕксĕр ертсе пынине палăртать.

Шмаков юлташ Урачăк, Етĕрне, Октябрьски, Шăмăршă, Шупашкар райкомĕсен ĕçĕсем çинче тĕплĕ чарăнса тăрать. Асăннă организацисен ĕçĕсене тĕрĕслесе тухни çакна кăтартнă: çак районсем ялхуçалăх ĕçĕсем енĕпе кая юлса пынин тĕп сăлтавĕ вăл — колхозсенчи парти организацийĕсем партиллĕ-организациллĕ тата политикăллă ĕçе япăхтарнинчен, вĕсене парти райкомĕсем начар ертсе пынинчен килнĕ. Докладчик çак çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе умра тăракан задачăсем çинчен калать.

Малалла Шмаков юлташ çапла калать:

— Колхозсенчи парти организацийĕсен ĕçĕсене лайăхлатмалли майсем çинчен сӳтсе явнипе пĕрлех, ВКП(б) обком пленумĕн колхозсенчи комсомол организацийĕсен ĕçне лайăхлатасси çине тимлĕ пăхмалла.

Республикăри пур колхозсенче те комсомол организацийĕсем ĕçлеççĕ. 720 организацире комсомол комитечĕсем тунă. уй-хир бригадисенче тата выльăх-чĕрлĕх фермисенче комсомол групписем 1.720 организациленĕ.

Комсомол организацийĕсем пысăк вăй пулса тăраççĕ. Колхозсен çĕрĕç культурине ӳстерес ĕçре çак вăйпа пĕлсе усă курасси пирĕн республикăри парти организацийĕн пысăк задачи пулса тăрать. ВКП(б) райкомĕсен колхозсенчи комсомол организацийĕсен ĕçне, уйрăмах парти организацийĕсем çук колхозсенчи комсомол организацийĕсен ĕçне лайăхлатасси çине тимлĕ пăхмалла.

Докладчик коммунистсемпе ертсе пыракан кадрсене марксистла-ленинла воспитани парасси пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртса, Сталин юлташăн çак сăмахĕсене аса илтерет: эпир хамăр кадрсене идеологи енĕпе хатĕрлесе çитерес пулсан, вĕсене чăн-чăн марксист-ленинецсем туна пултарас пулсан, эпир. хамăрăн мĕнпур ыйтусенчен вуннă пайран тăхăр пайне татса панă пулăттăмăр.

— Коммунистсене тата колхозсенчи ертсе пыракан кадрсене марксистла-ленинла теорие çине тăрса вĕрентни, — тет малалла Шмаков юлташ,—партипе Совет государстви ялхуçалăх работникĕсем умне кăларса тăратнă задачăсене ăнăçлă пурнăçлама паха услови туни пулать.

1951—1952 вĕренӳ çулĕнче пирĕн республикăра коммунистсемпе партире тăман актив валли ялсенче политшкулсем 400 яхăн, тĕрлĕ кружоксем 1.400 ытла организациленĕ. Марксистла-ленинла теорие харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсен йышĕ ӳссе пырать.

Нумай колхозсенчи парти организацийĕсем коммунистсене, комсомолецсене тата партире тăман активна вĕрентес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ. Анчах та колхозсенчи парти организацийĕсен ĕçĕнче марксистла-ленинла теорие вĕренес ыйтăва ертсе пырас тĕлĕшпе çаплах пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Чылай парти организацийĕсенче политшкулсемпе, кружоксенче вĕренме илнĕ чухне коммунистсемпе партире тăман активăн пĕтĕмĕшле пĕлĕвĕпе политикăллă хатĕрленĕвĕ мĕнле пулнине кирлĕ пек шута илмен, партире тăман актива идейăпа политика тĕлĕшĕнчен воспитани парассине хакламаççĕ. Сĕнтĕр, Етĕрне, Шăмăршă, Буславкка районĕсенчи нумай политшкулсемпе кружоксем вĕренӳ планĕсене пурнăçламаççĕ.

Политшкулсемпе кружоксенче занятисем идейăпа теори тĕлĕшĕнчен начар иртеççĕ. Çавăн пекех лекцисемпе консультацисен пахалăхĕ те çителĕксĕр. Занятисенче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕнчи» тата марксизм-ленинизм классикĕсен ытти произведенийĕсенчи теориллĕ положенисене чылай чухне тарăнăн ăнлантарса памаççĕ. Марксизм-ленинизм теорине сайра хутра мар догма вырăнне хурса ăнлантараççĕ, вуласа кăна параççĕ. Занятисене час-часах коммунизм строительствин практикипе çыхăнтармасăр иртереççĕ.

Чылай колхозсенчи парти организацийĕсенче кадрсем харпăр хăй тĕллĕн мĕнле вĕреннине çителĕксĕр тĕрĕслесе тăраççĕ. Нумай колхоз председателĕсем, правлени членĕсем, фермăсен заведующийĕсем марксистла-ленинла теорие вĕренес тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ. Парти райкомĕсем вара çакăнпа килĕшсе тăраççĕ, колхозсенчи парти организацийĕсене ертсе пыракан кадрсен идейăллă-политикăллă шайне хăпартас тĕлĕшпе кирлĕ пек пулăшмаççĕ.

Парти пропаганди вăл парти ĕçĕн пысăк та ответлă пайĕ пулса тăрать. ВКП(б) райкомĕсемпе обкомăн парти вĕренĕвне ертсе пырас ĕçре колхозсенчи парти организацийĕсене пулăшма тивĕçлĕ майсем йышăнмалла.

Докладчик, çавăн пекех, ĕçсыннисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕç мĕнле тăни çинче тата ăна лайăхлатмалли майсем çинче чарăнса тăрать. Политикăллă-массăллă ĕçе кирлĕ пек организацилемиинчен партипе правительство пирĕн республикăри ялхуçалăхĕ умне кăларса тăратнă задачăсене ăнăçлă пурнăçласси килет. Шмаков юлташ ĕçсыннисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх туса пыракан колхозсенчи парти организацийĕсен ĕçĕсене сутатса парать. Çакăн пек организацисенче политикăллă-массăллă ĕçе колхозсен хуçалăхла ĕçĕпе тачăн çыхăнтарса пыраççĕ, çавăн тăрăх хуçалăхла-политикăллă задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Ку тĕлĕшпе вăл Канаш районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоза илсе кăтартать. Кунта массăллă-политикăллă ĕç тата культурăпа çутĕçĕ çине тимлĕ пăхаççĕ: 1951 çулта 300 çын вырнаçмаллăх пысăк клуб туса лартнă, колхозниксен чылай килĕсене радио кĕртнĕ. Колхозра библиотека ĕçлет, лектори усă. Иртнĕ çулталăк хушшинче 64 лекци, 23 доклад иртернĕ, 13 номер стена хаçачĕ, 75 номер боевой листоксем, 7 номер çиçĕмхаçат кăларнă, 7 хутчен вулакансен конференцийĕ иртернĕ. Клубра кашни эрнере кинокартина кăтартаççĕ. Уйăхра пĕр хутран кая мар спектакль кăтартаççĕ. Агитаторсем колхозниксене партипе правительствăн паллă решенийĕсем çинчен, çĕршыври тата тĕнчери ĕçсем çинчен вăхăтра пĕлтереççĕ. Колхоз хуçалăхла-политикăллă задачăсене ăнăçлă пурнăçлать. Кунта ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксем çук. Кашни çын пуçне вăтам шутпа çулталăк хушшинче 220 ĕçкунĕ тивет. Колхоз пысăк тухăçлă тырпул пухса кĕртнĕ, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те тултарнă, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра парса татнă. Вăрман хатĕрлев планне кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарнă.

Анчах та пĕтĕмĕшпе илсен республикăра агитацине пропаганда ĕçĕн шайĕ хальхи вăхăтри задачăсемпе ĕçсыннисен ыйтăвĕсен шайĕнчен юлса пырать. Нумай колхозсенче массăллă-политикăллă ĕçе вăхăтран вăхăта кăна туса пыраççĕ. Агитколлективсем тăтăш ĕçлемеççĕ, хăйсен ĕçĕсене хуçалăхла-политикăллă задачăсемпе çыхăнтармаççĕ. Массăллă-политикăллă ĕçе ялти интеллигенцие—учительсене, врачсене, агрономсене тата ытти специалистсене çителĕксĕр хутшăнтараççĕ.

ВКП(б) обкомĕ Етĕрне, Урачăк, Шăмăршă, Елчĕк, Октябрьски, Шупашкар районĕсенче массăллă-политикăллă ĕç çителĕксĕр пынине палăртрĕ. Тĕслĕхрен, Елчĕк районĕнчи парти организацийĕ мĕн юлашки вăхăтсене çитиччченех ертсе пыракан партипе совет работникĕсен ĕçсыннисем хушшинче политикăллă докладсем тума кирлине хакламан. ВКП(б) райком секретарĕ Кузьмин юлташ 1951 çулта политикăллă ыйтусем тăрăх пурĕ те 6 доклад кăна тунă.

Массăллă-политикăллă ĕç вăйсăр пулни пуринчен ытла агитаторсемпе агитколлектив руководителĕсем хушшинче çителĕксĕр ĕçленинчен килет. Çавăн пек, Шупашкар районĕнче 1951 çулта агитколлектив руководителĕсен семинарĕсене пурĕ те 4 хут, Элĕк районĕнче вара пурĕ те 2 хут кăна иртернĕ.

ВКП(б) райкомĕсемпе колхозсенчи парти организацийĕсен массăллă-политикăллă ĕçе ертсе пырассине татăклăн вăйлатмалла, ку ĕçе ĕçсыннисен мĕнпур сийĕсем хушшинче туса пымалла. Уйрăмах массăллă-политикăллă ĕçе производствăллă бригадăсенче вăйлатасси çине тимлĕ пăхмалла.

Малалла докладчик культурăпа çутĕç учрежденийĕсен, пичет, радио, кино тата пропаганда ĕçĕсем çинче чарăнса тăрать.

Республикăра партиллĕ-политикăллă ĕçе хуçалăхла ĕçсемпе тĕрĕс çыхăнтарса туса пыракан парти организацийĕсем сахал мар. Вĕсем колхоз правленийĕсен ĕçĕсене ялан тĕрĕслесе тăраççĕ. Çапла майпа артель хуçалăхне аталантарас ĕçре пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ.

Тĕслĕхрен, Улатăр районĕнчи «Путь Ильича», Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан, Чкаловски районĕнчи «Гвардеец», Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозсенчи парти организацийĕсем организациллĕ пысăк ĕçсем туса иртереççĕ. Çавăнпа та асăннă колхозсем республикăра малта пыраççĕ.

— Парти организацийĕсем енчен колхоз правленийĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăмалли формăсенчен пĕри вăл,—тет малалла докладчик,—парти пухăвĕсенче артель пурнăçĕн хуçалăхла ыйтăвĕсене сӳтсе явни, колхоз руководителĕсен отчечĕсене итлени пулса тăрать. Парти организацийĕсен тĕрĕслесе тăмалли ĕçĕн çак формисемпе анлăн усă кураççĕ.

Хальхи вăхăтра парти пухăвĕсемпе партбюро ларăвĕсенче ялхуçалăх ĕçĕсем çинчен ыйтăвах сӳтсе яваççĕ, колхозсен хуçалăх ĕçĕнчи çитменлĕхсене çивĕччĕн критикăлаççĕ, çак çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса параççĕ. Парти организацийĕсен артель хуçалăхне ертсе пырас ĕçре колхоз правленийĕсене ытларах пулăшма пуçларĕç.

Анчах та час-часах çапла та пулать: уйрăм пуçламăш парторганизацисем тĕрлĕрен пĕчĕк ыйтусене ытларах сӳтсе явнипе колхоз строительствин ĕçне татса паракан тĕп ыйтусене манса хăвараççĕ. Çавăнпа чылай районсем кивĕлĕнсе тăраççĕ.

Сăмахран, Октябрьски районĕнче колхозсенчи нумай парторганизацисем колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетес, агротехникăна лайăхлатас, çĕрĕç культурине хăпартмалла тырпул тухăçлăхне ӳстерес, техникăллă культурăсем акса тăвас. колхоз производствин пулăшуллă отраслĕсене аталантарас тата колхозниксем хушшинче ĕç дисциплинине çирĕплетес ыйтусене пухусенче сӳтсе явмаççĕ. Республикăри ытти чылай районсенче те ĕç çавăн пекех.

Уйрăм парторганизацисем хăйсен вăйĕсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухасси тата колхоз производствинче коммунистсен авангардлă рольне ӳстересси çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмаççĕ. Пирĕн чылай çĕрте çакăн пек те пулать: коммунистсем штатлă вырăнсенче çеç ĕçлеççĕ, уй-хир бригадисенче выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем сахал пулаççĕ. Калинино районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозра 10 коммунист, вĕсенчен 2 çын çеç производствăра ĕçлеççĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçра работниксем хушшинче вара коммунистсем пĕр çын та çук.

Сталин юлташ пирĕн колхоз строительстви ялхуçалăхне аталантарассишĕн парти организацийĕсем ответлă пуласси тата тăрăшасси чакмасть, пĕтĕмпех урăхла, парти организацийĕсен ответлăхĕ ӳсет, вĕсен ытларах тăрăшмалла пулать, тесе кăтартса парать,—çак кăтарту хальхи вăхăтра, колхоз строительстви çĕнĕ тапхăра кĕнĕ, колхозсем пысăкланнă, çавна май кашни колхоза ертсе пырас ĕç те пысăкланнă вăхăтра, уйрăмах паха пулса тăрать. Парти организацийĕсен хальхи тапхăрта колхозсене ертсе пырас ĕçе уйрăмах тĕплĕ, оперативлă тата конкретлă туса пымалла.

Умра çакăн пек задача тăрать: парти организацийĕсен кашни колхоз пурнăçне, унăн экономикине тĕплĕ, пур енĕпе те пĕлмелле, артелĕн производство тата хуçалăх ĕçĕсенчи ыйтусене тăтăшах сӳтсе явса, татăклă решенисем йышăнмалла, çапла вара ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăна—мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерессине, обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес, çав вăхăтрах выльăх-чĕрлĕхрен тупăш ытларах илессине ăнăçлă пурнăçласа пымалла.

Юлашки вăхăтра ВКП(б) обкомĕ хăшпĕр районсенче—Улатăр, Советски, Красноармейски, Елчĕк районĕсенче—ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснă фактсем пулнине палăртрĕ. Кун пек фактсем пулни парти райкомĕсем колхозсенчи парторганизацисене тата вĕсен секретарĕсене ялхуçалăх артелĕн Уставне пурнăçласа пыма вĕрентменнинчен, ялхуçалăх артелĕн Уставне пурнăçланине пĕрмаях тĕрĕслесе тăни колхозсене большевикла ертсе пырас ĕçри чи паха задачăсенчен пĕри пулнине парти райкомĕсем хăйсем те час-часах манса кайнинчен килет.

Парти организацийĕсен ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснине килĕшсе пурăнас енлĕ йăлана пĕтĕмпех пĕтермелле, çапла вара, колхозсене вĕсен обществăллă çĕрĕсене тата пурлăхне хапсăнакансенчен сыхламалла.

Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсене вăхăтра тата лайăх хатĕрленсе иртерни, ялхуçалăх артелĕн ĕçĕсене туса пымалли демократиллĕ йĕркесене çирĕп пурнăçлани парти организацийĕсен колхозсене ертсе пырас ĕçри паха сыпăкĕ пулса тăрать.

Унтан докладчик республикăри парторганизацин çывăх вăхăтра пурнăçламалли задачăсем çинчен калать.

— Партипе правительство тата Сталин юлташ хăй ялхуçалăхне вăйлатса пырассишĕн, ăна çĕнĕ техникăпа хĕçпăшаллантарассишĕн куллен-кун тăрăшаççĕ,—тесе калать Шмаков юлташ.—Халĕ эпир тракторсемпе ытларах ĕç тума, ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсене ытларах механизацилеме, производствăра, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре, колхоз производствин ытти отраслĕсенче те йывăр ĕçсене механизацилеме, 1952 çулхи çуркуннерен пуçласа республикăри кашни колхоза машина-трактор станцийĕ ĕçлесе памалла тума пултаратпăр.

Кунпа пĕрлех докладчик МТС-сен ĕçĕнче механизаторсен кадрĕсене хатĕрлес, тракторсемпе ытти машинăсене юсас, çуркуннехи уй-хир ĕçĕсене тума хатĕрлес ĕçре чылай çитменлĕхсем пуррине палăртать. Уйрăм МТС-сенче машинăсене юсама лайăх хатĕрленмесĕр тытăннă, машинăсене юсас ĕç вăраха кайнă, пĕтĕм республикипе илсен машинăсене юсас ĕç иртнĕ çулхинчен чылай япăхрах пулса пырать. Тракторсене юсас ĕçре Калинино, Канаш, Муркаш, Сиява, Етĕрне, Шупашкар, Октябрьски, Сĕнтĕрвăрри МТС-сем уйрăмах кая юлса пыраççĕ.

ВКП(б) райкомĕсен, машина-трактор станцийĕсен ĕçĕсене лайăхлатма тăрăшса, çак задачăсене хăвăрт пурнăçламалла: тракторсене вĕсенчен кăларса ĕçлемелли ялхуçалăх машинисене лайăх тата вăхăтра юсаса çитермелле, кашни МТС валли механизаторсен ĕçта кадрĕсене, кашни трактор икĕ сменăпа ĕçлемелле тăвассине шута илсе, çителĕклĕ вĕрентсе хатĕрлемелле.

Пирĕн Чăваш республикинче чи лайăх механизаторсем Пронькин, Салкин, Михайлов, Григорьев тата ыттисем те пуçарнипе республикăра механизаторсен социализмлă ăмăртăвĕ сарăлчĕ. Вĕсем техникăпа лайăх усă курассишĕн, Сталин юлташ патне янă çырура МТС работникĕсем илнĕ обязательствăсене ăнăçлă пурнăçлассишĕн социализмлă ăмăртса ĕçлеççĕ. Çак ăмăртăва анлă сарасси, мĕнпур механизаторсене ăмăртăва хутшăнтарасси парти райкомĕсен паха задачи пулса тăрать.

Çак задачăсене пурнăçлама МТС-сен ĕçĕсене лайăхлатас, МТС-сенчи техникăна лайăхрах усă курас, колхозсене ертсе пырас ĕçре МТС-сен организацилекен рольне ӳстерес енĕпе тăрăшса ĕçлемелле. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ пирĕн республика ялхуçалăхĕ умне кăларса тăратнă пысăк задачăсене МТС-сен ĕçне лайăхлатмасăр пурнăçлама май çук.

МТС-сен ĕçĕсене лайăхлатас енĕпе колхозсенчи парторганизацисем те нумай пулăшмалла. Вĕсен уй-хир бригадисене трактор бригадисем хушшинче туслăха çирĕплетес, трактор бригадисене ĕçлеме лайăх условисем туса парас, вĕсене пур енĕпе те пулăшас, 1952 çулта вăйлă тырпул туса илме уй-хир бригадисене трактор бригадисем хушшинче социализмлă ăмăрту сарса ярас енĕпе ĕçлемелле.

Шмаков юлташ хăйĕн докладĕнче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе парторганизацисем умĕнче тăракан задачăсем çинчен тĕплĕ калать, ку ĕçри пысăк çитменлĕхсене, обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне тата выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăша ӳстерес пымалли плана çителĕксĕр пурнăçланин сăлтавĕсене уçса палăртать.

Парти райкомĕсене колхозсенчи парторганизацисен,—тесе калать докладчик,—обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри пысăк çитменлĕхсене пĕтермелле, колхоз производствин çак пайĕнче большевикла йĕрке туса хумалла, çапла вара, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси ялхуçалăхĕн пысăк тупăш паракан отраслĕ пулса тăтăр тесе тăрăшмалла.

Çак задачăна ăнăçлă пурнăçлама выльăх-чĕрлĕхе лайăх хĕл каçармалла, тĕрĕс-тĕкел пăхса усрамалла, салатса пĕтерни пулмалла мар, çамрăк выльăхсене пĕтĕмпех лайăх пăхса ӳстермелле тата выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăша ӳстерес пымалла.

Выльăх-чĕрлĕхе пăхас ĕçри обезличкăна пĕтерессипе, ĕçе организацилес тата ĕçшĕн тӳлес енĕпе пулнă çитменлĕхсене пĕтерессипе, кашни колхозра выльăх апачĕ туса хатĕрлекен тата строительство бригадисем организацилессипе, çак бригадăсене çулталăкĕпех хăйсен тĕп ĕçне тутарасси çине парти организацийĕсен уйрăмах тимлĕ пăхас пулать.

Малалла докладчик вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçри паллă тапхăр — çуракине хатĕрленесси çинчен калать. Вăл чылай районсенче вăрлăх хатĕрлес, агротехникăллă ĕçсене пурнăçлас, ялхуçалăх машинисемпе инвентаре юсас, колхозсенчи вăйсене ĕçлемелли выльăхсене çуракине хатĕрлес енĕпе çитменлĕхсем пуррине палăртать.

— Колхозсемпе МТС-сенче çуракине хатĕрленес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пурри,—тесе палăртать Шмаков юлташ,—хăшпĕр районсенче парти райкомĕсем, райисполкомсем, ялхуçалăх органĕсемпе МТС-сен руководителĕсем ВКП(б) обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ йышăннă решение пурнăçлассине çителĕксĕр организацилени, хуçалăхпа культура строительствине ертсе пырас ĕçре пулнă пысăк çитменлĕхсемпе йăнăшсене пĕтерме çителĕклĕ мерăсем йышăнманни, колхозсен ĕçĕсене иртнĕ вăхăтри пекех вăтам цифрăсем тăрăх хаклани, ĕçсене тишкĕрсе пăхманни, вăтам цифрăсем çине ытларах пăхнипе кая юлнă колхозсене курманни çинчен калать.

Райкомсемпе колхозсенчи парторганизацисем умĕнче çакăн пек задача тăрать: палăртнă çитменлĕхсене пĕтерсе, парти организацийĕсене, совет органĕсемпе ялхуçалăх органĕсен, машина-трактор станцийĕсен работникĕсене тата мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене 1952 çулхи çуракине лайăх хатĕрленсе иртерме мобилизацилемелле.

Шмаков юлташ парти обкомĕн хăшпĕр пайĕсен: парти, профсоюз тата комсомол органĕсен пайĕн, ялхуçалăх пайĕн, пропагандăпа агитаци пайĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртать, вĕсем колхозсенчи парторганизацисен ĕç опытне пĕтĕçтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ, колхозсенчи парторганизацисене партиллĕ-организациллĕ тата политикăллă ĕçе организацилес енĕпе çителĕклĕ пулăшмаççĕ.

Хăйĕн докладне вĕçлесе, Шмаков юлташ çапла калать:

— ВКП(б) Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви пирĕн республика ялхуçалăхне куллен-кун пысăк пулăшу параççĕ. Парти организацийĕсен, партипе правительство тата Сталин юлташ хăй Чăваш республикин ялхуçалăхне малалла вăйлатса пыма тăрăшни çине ответлесе, Сталин юлташ патне янă çырура илнĕ обязательствăсене ăнăçлă пурнăçлассишĕн ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксен — механизаторсен, колхозниксемпе колхозницăсен, ялхуçалăх специалисчĕсен социализмлă ăмăртăвне организацилемелле.

• • •

Шмаков юлташ докладĕ тăрăх пренире 17 çын тухса каларĕ.

ВКП(б) Тăвай райкомĕн секретарĕ **Иванов** юлташ çакна палăртать: колхозсенче пуринче те пуçламăш парторганизацисем тунă, колхозсене ертсе пырасси чылай лайăхланнă, колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатнă.

— Тĕслĕхшĕн «Новый путь» колхоза кăтартса пама юрать. Кунти парторганизацин йышĕ пысăк мар, пĕтĕмпе те 9 коммунист кăна. Апла пулин те колхоз пурнăçĕнче пуçламăш парторганизаци влиянийĕ пысăк.

Коммунистсене колхоз производствинчи ответлă участоксем тăрăх вырнаçтарса тухнă: бригадирсем—2, фермăра ĕçлекенсем—2, радовой колхозниксем—3. 1951 çулта парторганизаци 15 пуху иртернĕ, вĕсенче 32 ыйту сӳтсе явнă. Çав ыйтусенчен нумайăшĕ колхоз производствипе тачă çыхăнса тăрать.

Парторганизаци хăйĕн усă пухăвĕсенче хуçалăхла-политикăллă задачăсене пурнăçласа пыни çинчен колхоз председателĕн отчечĕсене итленĕ, решенисем йышăннă тата вĕсене мĕнле пурнăçланине куллен тĕрĕслесе тăнă.

Парторганизацири коммунистсем пурте парти ĕçне активлă хутшăнаççĕ.

Коммунистсем колхоз производствинчи пур ĕçсене те активлă хутшăннă май, колхоз ялхуçалăхĕнчи ĕçсене вăхăтра тата ăнăçлă туса пырать, государство умĕнчи обязательствăсене чыслă пурнăçлать. Артель выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана тултарнă, выльăх-чĕрлĕхсен тухăçлăхне ӳстернĕ.

Хальхи вăхăтра ку колхоз вăрман хатĕрлемелли плана ăнăçлă тултарса пырать, çитес çуракине те лайăх хатĕрленет.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕсене куллен хи ĕçре пулăшас шутпа ВКП(б) райкомĕ вĕсемпе час-часах семинарсем иртерет. Секретарьсенчен чылайăшĕ ВКП(б) обкомĕ çумĕнчи курссенче вĕреннĕ. Райком бюровĕн ларăвĕсенче 8 пуçламăш парторганизаци секретарĕсен отчечĕсене итленĕ. Юлашки вăхăтра ертсе пырас ĕçĕн большевикла меслечĕ çинчен, парти пухăвĕсене хатĕрлесе иртерессипе çинчен, коммунистсене партпоручени парас йĕрке çинчен, парторганизацисен ĕçĕнчи паха опыт çинчен лекцисемпе докладсем иртерме тытăннă.

Анчах пуçламăш парторганизаци секретарĕсене вĕрентес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Парти райкомĕ çав çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме тăрăшать.

Партин Çĕрпӳ райкомĕн секретарĕ **Кирпичев** юлташ районти парторганизацисем тырпул тухăçлăхне, обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ӳстерес, агротехникăллă пĕлĕве пропагандăлассине вăйлатас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен каласа пачĕ.

ВКП(б) Шăхасан райкомĕн секретарĕ **Родионов** юлташ районти парторганизаци ВКП(б) Чăваш обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене пурнăçлани çинчен каларĕ, ВКП(б) обкомĕн хăшпĕр пайĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртрĕ.

— Ман шутпа,—тет вăл, — ВКП(б) обкомĕн ялхуçалăх пайĕ колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе çителĕксĕр тăрăшать. Çак пайăн работникĕсем парторганизаци секретарĕсен семинарĕсенче, парти пухăвĕсенче пулмаççĕ. Эпĕ Шăхасан районĕнче ĕçлеме пуçланăранпа ялхуçалăх пайĕнче ĕçлекенсенчен никам та отчетпа суйлав пухăвĕсенче пулмарĕ. Ку пайăн работникĕсем тĕрлĕ информацисем пухас тĕлĕшпе ытларах ĕçлеççĕ, анчах вырăнти пурнăçа тĕплĕ тĕпчесе пĕлме тăрăшмаççĕ.

Родионов юлташ парти обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн, парти, профсоюз тата комсомол органĕсен пайĕн çитменлĕхсене палăртать.

Пленумра пулнисем Кувакино районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕн **Романов** юлташăн сăмахне тимлĕ итлерĕç. Вăл пĕчĕк колхозсене пĕрлештерсе пысăклатнă хыççăн тырпул тухăçлăхĕ хăвăрт ӳсни çинчен, артель производстви малалла аталанни çинчен каласа пачĕ.

Киров ячĕпе тăракан колхозăн çĕрĕ 6.397 гектар, 3 пин пуçа яхăн тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕх. Çĕнĕ техникăпа усă курни, агротехника кăтартăвĕсене çирĕп пурнăçлани, ĕçе тĕрĕс организацилени тырпул тухăçлăхне, 1949 çулхипе танлаштарсан, икĕ хута яхăн ӳстерме май панă. Калинин юлташ ертсе пыракан бригада кашни гектартан 180-шар пăт тулă пухса кĕртнĕ. Ку бригадăри колхозниксем Сталин юлташ патне янă çырура кăçал кашни гектартан 192 пăт тулă пухса кĕртме сăмах панă.

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе те колхоз палăрмалла ӳсĕмсем тунă. Сăмахран, пĕлтĕр сăвакан кашни ĕнерен 1.680 литр сĕт суса илнĕ.

— Пирĕн колхозниксем,—тет Романов юлташ,—партипе правительство пирĕн умма кăларса тăратнă задачăсене чыслă пурнăçласса пĕтĕм чĕререн ĕнсе тăраççĕ.

Романов юлташ ялти коммунистсен марксистла-ленинла вĕренĕвне организацилессине, партин шалти ĕçне тата политикăллă-массăллă ĕçсене вăйлатма парторганизацисене ытларах пулăшса пыма кирлине палăртать. Вăл обком тата райком работникĕсене колхозсенче час-часах пулса, колхозниксем валли политикăллă докладсем иртерме сĕнӳ парать.

— ВКП(б) обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене тата райком отчечĕ тăрăх обком бюровĕ йышăннă решение пурнăçласа,—тет ВКП(б) Муркаш райкомĕн секретарĕ **Зайцев** юлташ,—эпир колхозсенчи парторганизацисене ертсе пырасси чылай лайăхлатрăмăр. Райком парторганизацисен кĕрешӳри пултарулăхне ӳстерме, вĕсен пуçарулăхне вăйлатма, колхоз производствинчи тĕп ыйтусене татса парас ĕçре парторганизацисен рольне ӳстерме, колхозниксене политикăллă воспитани парас ĕçе вăйлатма тăрăшать.

Хальхи вăхăтра пирĕн районти 24 колхозра пуçламăш парторганизацисем пур. Вĕсенчен нумайăшĕнче кашнинчех 10—30 коммунист шутланать. 5 парторганизацире партбюро тунă.

Пуçламăш парторганизацисем çине таянса ĕçлесе, ВКП(б) райкомĕ хуçалăхла-политикăллă задачăсене лайăхрах пурнăçласа пыма пуçларĕ. Иртнĕ çулта районти колхозсем ялхуçалăхĕнчи пур ĕçсене те ăнăçлă туса пычĕç, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен пурнăçларĕç, республикăра пуринчен малтан вăрман хатĕрлев планне тултарчĕç.

Колхоз производствин пур участокĕсенче те коммунистсен авангардлă ролĕ ӳсрĕ. Кунпа пĕрлех Зайцев юлташ колхозсенчи пуçламăш парторганизацисене ертсе пырас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртать. Парти райкомĕ хăш чухне парторганизацисен ĕçне тĕпĕ-йĕрĕпе тĕпчесе пĕлмест, ĕçре вĕсене çителĕксĕр пулăшать, партиллĕ-организациллĕ тата политикăллă ĕçсене йĕркелес, кадрсемпе ĕçлес, колхозсен ĕç вăйĕпе, ытти ресурсĕсемпе усă курас, ВКП(б) обкомĕн VIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçлас ыйтусем тăрăх парторганизаци секретарĕсен отчечĕсене сахал итлет. Районта вăйсăр парторганизацисем пур, вĕсем колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетес, колхозниксене политикăллă воспитани парас ĕçсенче хăйсен пуçарулăхне кирлĕ чухлĕ палăртаймаççĕ.

Уйрăмах машина-трактор станцийĕнчи пуçламăш парторганизацин ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Вăл механизаторсен социализмлă ăмăртăвне начар ертсе пырать, малта пыракансен опытне çителĕксĕр сарать, машинăсемпе тухăçлă ĕçлессишĕн, горючи перекетлессишĕн, ĕçĕн çĕнĕ меслечĕсене сарассишĕн начар кĕрешет. Çавна пулах ĕнтĕ МТС тракторсемпе ытти машинăсене юсас тĕлĕшпе юлса пырать.

— Муркаш районĕнчи парторганизаци,—тет юлашкинчен Зайцев юлташ,—Сталин юлташ патне янă çырура илнĕ обязательствăсене чыслă пурнăçлама пĕтĕм вăя мобилизацилет.

Пленумра Çĕмĕрле районĕнчи «Комбинат» колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Иванов** юлташ тухса каларĕ.

— Пирĕн колхоз юнашар ялти колхозпа пĕрлешнĕ хыççăн çулталăк иртрĕ,—тет вăл.—Çак кĕске вăхăтра артель хуçалăхне малалла аталантарас ĕçре пысăк çитĕнӳсем турăмăр.

Икĕ колхозри пуçламăш парторганизацисем те пĕрлешрĕç. Хальхи вăхăтра пирĕн организацире 42 коммунист. Иртнĕ çулталăк хушшинче кăна колхозра малта пыракан 7 çынна партие илтĕмĕр.

Юлашки 3-мĕш страницăра.

ВКП(б) Чăваш обкомĕн IX-мĕш Пленумĕ

Колхозсенчи парти организацийĕсен ĕçĕсене лайăхлатмалли майсем çинчен

Пуçламăшĕ 2-мĕш страницăра

Колхозсем пĕрлешсенех пирĕн парторганизаци артеле аталантармалли пилĕк çуллăх план тума тытăнчĕ. Çак ĕçе актива анлă хутшăнтартăмăр. Плана колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче çирĕплетнĕ. Колхозниксене планра палăртнă ĕçсем çинчен, плана пурнăçлассишĕн мĕнле кĕрешмелли çинчен тĕплĕ каласа патăмăр.

Колхозниксем хушшинче парторганизацин влиянине ўстерес шутпа, коммунистсене артель хуçалăхĕн пур отраслĕсем тăрăх та вырнаçтарса тухрăмăр, 4 уй-хир бригадинче тата фермăра партгруппăсем турăмăр. Партбюро вĕсен ĕçне куллен ертсе пырать. Хальхи вăхăтра 22 коммунист уй-хир бригадисенче, 5 коммунист фермăсенче, 3 коммунист хушма хуçалăхра ĕçлеççĕ. Строительство бригадинче те коммунистсем пур.

Парти членĕсем кирек хăш ĕçре те паха тĕслĕх кăтартаççĕ. Сăмахран, Тарасов юлташ ертсе пыракан бригада иртнĕ çулта хăшпĕр участоксенче гектартан 27-шер центнер, акнă пĕтĕм лаптăкри кашни гектартан 17,5-шер центнер тĕштырă пухса кĕртрĕ. Черкасов юлташ ертсе пыракан бригада 50 гектар çинчен кашни гектартан 18,5-шер центнер, Киселев юлташ ертсе пыракан бригада 96 гектар çинчен кашни гектартан 17-шер центнер тĕштырă пухса кĕртрĕç. Вăтам шутпа колхоз кашни гектартан 15-шер центнер тырă туса илчĕ. Пирĕн колхоз мĕн юлашки çулччĕнех районта юлса пыракан колхозсенчен пĕри пулнă. Султалăк иртсенех гектартан 100-шер пăт тырă туса илме пуçлани вăл пĕрлешнĕ колхозăн хăватлă вăйне кăтартса парать. Пĕчĕк колхозра кĕске вăхăтрах çавăн пек пысăк ўсĕмсем тума май çук.

Пуçламăш парторганизаци выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе те хытă тăрăшать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана пĕтĕмпех тултарнă. Халĕ эпир çамрăк выльăхсене пурне те лайăх пăхса çитĕнтерме тăрăшатпăр.

Парторганизаци пуçарнипе колхоз фермăсенчи йывăр ĕçсене механизацилеме тытăнчĕ. Эпир выльăхсене лайăхрах тăрантарма тата пăхма вĕренсе пыратпăр. Выльăх апатне кирлĕ пек хатĕрленипе кашни савакан ĕнерен талăкра 10-шар литр сĕт суса илме пуçларăмăр.

Юлашки çулталăк хушшинче артелĕн ытти отраслĕсене аталантарас тĕлĕшпе пысăк çитĕнўсем тунă. Колхозăн 550 çемье хурт-хăмăр пур. Вăтам шутпа кашни вĕллерен 58-шар килограмм пыл илтĕмĕр. Колхоз пилорама лартрĕ, кирпĕч производстви организацилерĕ. Çаксем пире ĕç вăйĕн ресурсĕсемпе тулли усă курма май пачĕç.

Хальхи вăхăтра пирĕн парторганизаци колхозниксене çитес çуракине лайăх кĕтсе илме, партипе правительство пирĕн республика умне каларса тăратнă задачăсене чыслă пурнăçлама мобилизацилет.

— Çак пленумра,—терĕ Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Новиков** юлташ,—пирĕн парторганизаци колхоза организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетессишĕн мĕнле кĕрешни çинчен каласа парас килет.

Пирĕн парторганизацире 39 коммунист. Пĕлтĕр пĕтĕмпе 19 пуху, вăл шутран 7 уçă пуху ирттернĕ. Пухусенче 44 ыйту сўтсе явнă. Парторганизацин уçă пухăвĕсене партире тăмав актив йышлă хутшăннă.

Коммунистсене пурне те колхоз производствин ответлă участокĕсене вырнаçтарса тухнă: 6 коммунист уй-хир бригадисене ертсе пырать, 5 коммунист выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлет, 18—рядовой колхозниксем. Вĕсем производствăра лайăх ĕçленипе кăтартса парас шутпа пĕр тĕслĕх илетĕп. Новикова колхозница пысăк тухăçлă махорка туса илес ĕç мастерĕ. Унăн звенинче ĕçпĕн хушса тўлесе 5.200 тенкĕ ытла укçа панă. Новикова юлташ хăй те 2.000 тенке яхăн илнĕ.

Колхоза организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетесси, колхозăн общественнăй пурлăхне пысăклатасси пирĕн ĕçре тĕп вырăн йышăнса тăрать. Тĕштырăна техникăлла культурăсен тухăçлăхне ўстересси çинчен парти пухăвĕнче тăвата хут сўтсе явнă. Коммунистсем пĕр шухăшлă пулса, конкретлă ĕçсем тума палăртрĕç, партбюро парти пухăвĕ йышăннă решенисене пурнăçланине тăтăш тĕрĕслесе тăчĕ.

Парти пухăвĕ йышăннă решенисене пурнăçланă май пирĕн колхоз иртнĕ çулта, ытти çулсемпе танлаштарсан, кашни гектар пуçне 3 центнер ытларах тырă туса илчĕ. Эпир государствăна 57 пин пăт тырă патăмăр. Государствăна махорка панăшăн 267 пин тенкĕ укçа илтĕмĕр.

Государство умĕнчи пур обязательствăсене те пурнăçласан, Уставпа пăхнă фондсене тусан, кашни ĕçкунĕ пуçне 2,7-шер килограмм тĕштырă, 1 тенкĕ те 70 пус укçа валеççе панă.

Выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ўстерес тĕлĕшпе те парторганизаци куллен тăрăшать. Ку ыйтăва эпир парти пухăвĕсенче 4 хут, партбюро ларăвĕнче 2 хут сўтсе явнă.

Колхоз общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пĕтĕмпех тултарчĕ. 1951 çулта выльăх-чĕрлĕхрен илнĕ тупăш 328 пин тенке çитрĕ.

Государствăна 60 пин литр сĕт сутнă. Эпир грузовой икĕ автомашина илтĕмĕр, теприне—преми шучĕпе пачĕç. Халĕ пирĕн колхозăн 5 автомашина.

Парторганизаци колхозăн общественнăй хуçалăхне пур енĕпе те аталантарса пырассишĕн тăрăшнипе пула колхоз 1951 çулта 1 миллион та 102 пин тенкĕ тупăш илчĕ.

Пуçламăш парторганизаци колхозниксем хушшинче, уйрăмах выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем хушшинче политикăлла-массăллă ĕçе куллен туса пырать. Эпир фермăра партгруппа турăмăр. Коммунистсем кашни кун колхозниксене хаçатсем вуласа параççĕ, калаçусем ирттереççĕ, стена хаçачĕсем кăлараççĕ. Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсене пурне те социализмлă ăмăртăва хутшăнтарнă. Вĕсем выльăхсене лайăх пăхса усрассишĕн кăна мар, вĕсен тухăçлăхне ўстерессишĕн те хастарлă кĕрешеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх фермипче ĕçлекен 31 çынна ĕçшĕн хушса тўленĕ. Колхозри ĕне сăвакансем кашни ĕнерен 3.000 литр сĕт суса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Парторганизаци выльăх-чĕрлĕх валли витесем тăвас тата фермăсенчи йывăр ĕçсене механизацилес ыйту çине тимлĕ пăхать. Иртнĕ çулта кăна колхозра 180 пуç ĕне валли, 400 пуç сурăх валли, 2.000 чăх-чĕп валли витесем тунă. Фермăсене электрификацилерĕ. Электричество вăйĕпе тымарçимĕçсемпе улăма тураççĕ, выльăх апатне пĕçереççĕ. Кăçал электричество вăйĕпе сурăхсен çăмне касма тытăнатпăр, автопоилка тăватпăр. Фермăра артезианла çăлсем тунă.

Хальхи вăхăтра пирĕн парторганизаци, колхоз правленийĕпе пĕрле, выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсене икĕ сменăна ĕçлеттерме куçарас ыйтăва тĕпчесе вĕренет.

Колхозра строительство ĕçĕсем вăйланса пынă пирки, пирĕн умма строительство материалĕсем хатĕрлес ыйту çивĕч тухса тăчĕ. Эпир кирпĕч заводĕ лартрăмăр, унти агрегат сехет хушшинче 1.200 кирпĕч тума пултарать. 1952 çулта 250 пин кирпĕч тума палăртнă.

Колхозра столярнăй тата слесарнăй мастерскойсем, механизациленĕ 4 арман, 3 çил арманĕ, 3 мир йĕрпи арманĕ, 2 çăм тапакан машина, çу çапакан 2 машина, хăма çуракан рама, центробежнăй пăчкă, 3 тимĕрç лаççи, смола тăвакан савод пур.

Парторганизаци массăллă-политикăллă ĕçе анлă туса пырать. Çак ĕçре пире ялти интеллигенци пулăшать. Вĕсем колхозниксем валли тĕрлĕ ыйтусем тăрăх лекцисемпе докладсем ирттереççĕ. Пур бригадăсенче те агитаторсем ĕçлеççĕ. Çавна пула ĕç дисциплини чылай çирĕпленчĕ, ĕç тухăçлăхĕ те нумай ўсрĕ.

Нумаях пулмасть парторганизацин уçă пухăвĕнче колхоз правленийĕн председателĕ Яблонский юлташ ялхуçалăх ĕçĕсен 1952 çулхи планĕ çинчен доклад туса пачĕ. Эпир тырпул тухăçлăхне, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ўстерме, хуçалăхри пур ĕçсене те лайăх туса пыма тивĕçлĕ решенисем йышăнтăмăр.

Пирĕн парти, правительство, аслă çулпуçăмăр тата учителĕмĕр Сталин юлташ ялхуçалăх ĕçченĕсемшĕн куллен тăвам атте пек тăрăшаççĕ. Пирĕншĕн тăрăшнине чĕрере тытса, эпир мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ўстерсе пыма, выльăх-чĕрлĕхе лайăх хĕл каçарма, выльăхсенчен илекен тупăша ўстерме, çапла вара хамăрăн юратнă Тăван çĕршыв валли тырпул тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытларах та ытларах пама тупа тăватпăр. Эпир хамăрăн социализмлă Тăван çĕршывăн экономикăллă вăй-хăватне ўстерес, пĕтĕм тĕнчере çирĕп мир тăвас тесе хамăрăн вăй-хăвата хĕрхенмесĕр ĕçлетпĕр.

Пленумра çавăн пекех «Советская Чувашия» хаçат редакторĕ **Карташов** юлташ, ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ **Александров** юлташ, ВКП(б) Етĕрне райкомĕн секретарĕ **Хромов** юлташ, Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Горшков** юлташ, ВКП(б) обкомĕн парти, профсоюз тата комсомол органĕсен пайĕн заведующийĕ **Талдыкин** юлташ, Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Токсубаев** юлташ, ВКП(б) Элĕк райкомĕн секретарĕ **Иванов** юлташ, Чăваш АССР Кинофикаци управленийĕн начальникĕ **Трофимов** юлташ, Буславка районĕнчи «**Динамо**» колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Козырев** юлташ, ВЛКСМ обком секретарĕ **Федорова** юлташ тухса каларĕç.

* * *

Сўтсе явнă ыйту тăрăх пленум тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Трактористсен курсĕ

КРАСНОАРМЕЙСКИ. МТС çумĕнче трактористсем вĕрентсе хатĕрлеме виçĕ уйăхлăх курс организациленĕ, унта 25 çын вĕренет. Пулас трактористсем тракторсăр пуçне ытти ялхуçалăх машинисене, агротехникăна вĕренеççĕ. Эрнере пĕр хут политзанятии пулать. Çак кунсенче курсра ВКП(б) райкомĕн секретарĕсем: Ф. Дмитриев юлташ Пĕтĕм Союзри мир шĕн тăраканссен 3-мĕш конференции итогĕсем çинчен доклад туса пачĕ, М. Сперанский юлташ «Пирĕн тĕллев—коммунизм» тема тăрăх лекци вуларĕ.

В. ИГНАТЬЕВ.

Ленин—Сталин партийĕ—Совет Çарĕн çĕнтерĕвĕсен организаторĕ

Февралĕн 23-мĕшĕнче Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене туса хунăранпа 34 çул тулать. Большевиксен партийĕ, аслă çулпуçсем Ленинпа Сталин тăрăшнипе туса хунă Совет Çарĕпе Тинĕс-çар Флочĕ çак тапхăрта кĕрешўсемпе çĕнтерўсен чаплă çулне утса тухрĕç.

Граждан вăрçи çулĕсенче тĕнчери мĕнпур империалистсем, пуринчен малтан Америка, Англи, Франци, Япони империалисчĕсем, çавăн пекех буржуалла-помещикла белогвардеецсем Совет республикине хăвăртрах пĕвса пăрахма тăрăшнă. Вĕсем малтан большевиксене пĕтерсе хума шутлана, ун хыççăн вара хăйсен çĕршывĕсенчи ирĕклĕхшĕн кĕрешекенсене çапса çĕмĕрме çăмăлрах пулĕ, тенĕ.

Анчах Антанта империалисчĕсен те, буржуалла-помещикла белогвардеецсен те Совет республикине хирĕç кашнин уйрăмăн кĕрешме майсем пулман. Çавăнпа вĕсем пĕр блока—контрреволюциллĕ блока пĕрлешнĕ те 1918 çулхи çуркунне Совет Российине хирĕç интервенци пуçласа янă.

* * *

1918—1920 çулсенчи граждан вăрçи вăл—капитализмпа социализм пĕр-пĕринпе пуçламăш хут хаярран тытăçни пулчĕ. Çав вăрçăра революциллĕ рабочисемпе хресченсене хирĕç, çамрăк Совет республикине хирĕç тĕнчери мĕнпур реакции пĕрлешнĕ вăйĕ кĕрешнĕ.

Америка, Англи, Франци, Япони тата ытти çĕршывсен империалисчĕсем рабочисемпе салтаксем вырăссем примерĕпе хăйсен штыкĕсене хăйсен хуçисене хирĕç çавăрасран, Российăпа Германи хушшинче тунă Брестри мир Германии вăрçăри ĕçне çăмăллатасран тата унпа пĕрлех пур фронтсенче те, пур çĕршывсенче те мир тăвас туртăм вăйланасран,—çавна пула хăйсен çăткăнла ĕмĕчĕсем ирккасса кайасран хăранă. Акă мĕншĕн вĕсем контрреволюци валли хĕçпăшал, апат-çимĕç, тумтир мĕн чухлĕ кирлĕ, çавăн чухлĕ парса тăнă кăна мар, совет влаçне сирпĕтсе антарас ĕçе хăйсем те тўрремĕнех хутшăннă.

Америка çарĕсен командующийĕ Гревс генерал: США вăрçăллă интервенцие Совет влаçне сирпĕтсе антарас ĕмĕтпе турĕ, тесе уççăнах каланă.

«Эпир Çĕпере çĕршер пин винтовка, çĕршер миллион патрон, çĕршер пин мăшăр тумтир, пулемет лентисем т. ыт. те ярса тăтăмăр,—тесе çырнă Англи генералĕ Нокс та.—Большевиксем енчелĕ персе кăларнă кашни пульăна Англире туса хатĕрленĕ»,—тенĕ вăл.

Совет республикине хирĕç вăрçăллă интервенци тăвассипе пĕрремĕш тĕнче вăрçинче çăмăллăн пуйса юлнă США организациленĕ, хĕтĕртсе тăнă.

Америка миллиардерĕсем 1918 çулта Совет Российин территорийĕ çине çарсем ăнтарса «...империализмăн малĕ иностранĕн уйрăмах тискер страницине усать» (Ленин, 28 т., 44 стр.). Вĕсем пĕрремĕш тĕнче вăрçинче çĕршер миллиард доллар услам тунă. «Кашни долларĕ çинче юн йĕрĕсем,—тенĕ Ленин,—миллионсенчен 10 миллион çын, аманса чăлахланнисенчен 20 миллион çын юнĕ юхтарнă юн йĕрĕсем...» (Çавăнтах, 46 стр.).

1918 çулта США империалисчĕсем хăйсен çарĕсене Йносет Хĕвелтухăçне, çавăн пекех Мурманскпа Архангельска антарнă. США пулăшнипе Англипе Франци интервенчĕсем Архангельск, Мурманск, Баку хулисене тата Вăтам Азири хăшпĕр районсене туртса илнĕ. Англипе Япони империалисчĕсем Владивостока, Приморьене, Çурçĕр Сахалина туртса илнĕ. Англипе Франци пулăшнипе Çурçĕр Кавказра Корнилов, Алексеев, Деникин генералсен çарне тунă, казаксен куш енĕсен пăлхавне çĕкленĕ. Совет республикине хирĕç поход пуçланă. Вăтам Атăл çинче тата Çĕпĕрте чехословаксен корпусĕн пăлхавне организациленĕ. Ку пăлхав Атăл тăрăхĕнчи тата Çĕпĕрти кулаксен, Воткинскри тата Ижевскри заводсенчи эсерла шухăш-кăмăллă рабочисен пăлхавне пуçламалли сигнал пулнă. Самарта тата Омскра белогвардеецсемпе эсерсен пуканелле правительствине тунă. Нимĕç империалисчĕсем вăртăн пулăшса тăнипе (Брестра мире пуль вĕсем малтанах вăхăтра уççăн пулăшма хăяйман) Дон çинче Красновпа Мамонтов пăлхавсем çĕкленĕ.

Германи, ун чухне хăй Америкăна, Англипе тата Францие вăрçнă пирки, Совет çĕршывне хирĕç уйрăммăн кĕрешнĕ. Антанта империалисчĕсем Германие Совет Союзĕ хушшинчи мирлĕ договора тăвас ĕçрен мĕншĕн пăсăнине хăварт туйса илсе, нимĕç империалисчĕсем часах Брестри мире пăснă та пирĕн Украинăна, Белоруссие, Закавказье туртса илнĕ, унта хăйсен çарĕсене кĕртнĕ, халăхсене тискеррĕн çаратма тата пусмăрлама тытăннă.

Çапла вара, 1918 çул вĕçленнĕ тĕле çамрăк Совет республикине тăшман вут-хĕмĕн ўнки çавăрса илнĕ. Ку вăл пирĕн Тăван çĕршывăн питĕ хăрушă вăхăт пулнă.

«Çак тапхăрăн калама çук пысăк йывăрлăхĕсем тата вĕсемпе питĕ хастаррăн кĕрешни,—терĕ Сталин юлташ,—рабочи класра мĕнле иксĕлми вăй-хал пуйнине, большевиксен партин авторитечĕн вăйĕ мĕн тери аслă, вăсне çук пысăк пулнине кăтартса панă» («ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ», 218 стр.).

Пирĕн парти çĕршыва вăрçă лагерĕ туса хуни çинчен пĕлтерчĕ. Совет правительстви: «Социализмлă Тăван çĕршыв—хăрушлăхра!»—тесе, халăха тăшмансене отпор пама чĕнчĕ. «Пурте фронт валли!»—çакăн пек лозунг панă аслă çулпуçăмăр В. И. Ленин. Çĕршер пин рабочисемпе хресченсем хăйсен ирĕкне Совет Çарне, фронта тухса кайнă. Ленин—Сталин партийĕ чĕннипе партипе комсомолăн пĕтĕм йышĕнчен çуррине яхăн фронта кайнă. Парти пĕтĕм совет халăхне ют çĕршыв захватчикĕсене хирĕç, революци сирпĕтсе антарнă эксплоататорла классен пăлхавĕсене хирĕç **Тăван çĕршыва сыхлама Отечественнăй вăрçа çĕкленĕ**. Çĕршыва хўтĕлес ĕçе В. И. Ленинпа И. В. Сталин большевикла партин ытти деятелĕсемпе пĕрле ертсе пынă. «Хĕрлĕ Çарăн чи паллă çĕнтерĕвĕсене тўрремĕнех хавхалантараканĕ тата организациленĕ Сталин пулнă» (И. В. Сталинăн кĕске биографийĕ, 83 стр.).

* * *

Хĕрлĕ Çар валли çавăн пекех фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем хула ĕçсыннийĕсем валли çăкăр кирлĕ пулнă. Тырă илсе тăма пĕртен-пĕр область—Кăнтăр Хĕвелтухăçĕ, Атăл тăрăхĕ тата Çурçĕр Кавказ çеç тăрса юлнă, вĕсем патне пымалли çул—Царицын урлă выртнă. Революци интересĕсене тырă тупнипе çеç çăлса хăварма май пулнă. Анчах тырă кулаксен тата спекулянтсен аллинче пулнă.

В. И. Ленин Петроградри рабочисене яла поход организацилеме—харампырсене хирĕç кĕрешекен чухăн хресченсене пулăшма кайма чĕннĕ. Партин Центральнăй Комитечĕ 1918 çулхи май уйăхĕнче Сталин юлташа чрезвычайнăй правăсем парса, Российăн кăнтăр енчи продовольстви ĕçĕсене ытти ĕçпе ертсе пыма Царицын хулине янă.

Сталин юлташăн Царицынри геройла ĕçĕ граждан вăрçи историйĕнчи чи паллă страницăсен пĕрне тăрать. Вăл Царицына 1918 çулхи июнĕн 6-мĕшĕнче рабочисен отрячĕпе çитнĕ. «Политикăллă çулпуçăн малашнехи хастар курса тăрас пахалăхĕ тата пайăзвонцыа тыллачĕ пĕр çынра пĕрлешни тыпи Сталина Царицын рольне пĕлме май панă. Царицын контрреволюцин енчен хăйне пырса çапмалли вырăн пулнă» (И. В. Сталинăн кĕске биографийĕ, 73 стр.).

Кирек мĕнле пулсан та, Царицына хўтĕлесе хăварма пулнă, мĕншĕн тесен ăна илсессĕн туртса илни Республикăна тырпулăн юлашки ресурсĕсенчен, Бакури нефтьрен татса пулĕччĕ. Донри контрреволюципе Колчакпа тата Чехословаксен контрреволюциипе пĕрлешме, ун хыççăн пĕр пĕтĕм фронтпа Мускав çине кайма май пама пулĕччĕ.

И. В. Сталин, хулана белогвардеецсен захватчикĕсенчен тасатнă тата вырăна антăранă станцие валли чылай апат-çимĕç ăсатнă тарса, хăйĕн мĕнпур вăйхалĕпе пулăшупулăхне Царицына хўтĕлес ĕçе панă.

Сталин юлташ çакна хăвăрт тавçăрса илнĕ: хулара пирĕн çĕршывăн чи тискер тăшманĕ—Иуда Троцкий янă контрреволюциллĕ специалистсем нумай пулнă. Сталин юлташ çав специалистсем хирĕç уйăхне хаяррăн çĕмĕрсе пынă, вĕсен сăмăрла ĕçĕсене хăвăрт тăрă шыв çине кăларнă, хулана хўтĕлесе кирлĕ татăклă мерăсене йышăннă.

Сталинăн хурçă пек çирĕп шухăш-кăмăлĕ тата вăл малашлăха генилле курса тăни Царицына çăлса хăварнă, шуррисене Мускав патне кайма паман. Сталин юлташ ертсе пынипе Хĕрлĕ Çар тăшмана хăваласа пырса çапнă. Царицын патĕнче тăшмана çĕнтерес ĕçре уйрăмах Сталин юлташ пуçарăвĕпе организациленĕ пĕрремĕш утлă çар—С. М. Буденнăй çарĕ пысăк вырăн йышăннă.

Каттăр Хĕрлĕ Çар çĕнтерў хыççăн çĕнтерў тунă. Краснов генералăн Царицын патĕнчен хĕсĕ кăларнă та Дон хыçнелле хăваласа янă. Деникин генералăн Çурçĕр Кавказăн пĕчĕк районĕсенчен тухса вăрçма паман, Корнилов генералăн Хĕрлĕ Çара хирĕç çапăçнă чухне вĕлернĕ. Чехословаксене тата эсерла-белогвардеецла вăрă-хураксене Хусантан, Чĕмпĕртен, Самартан хăваласа кăларнă та Урал патне хĕссе çитернĕ. Çавăн пекех Савинков пăлхавне пусарса лартнă. Пăлхав организаторне—Англин Мускаври миссийĕн пуçлăхне Локкарта арестленĕ. 1918 çулхи июнь уйăхĕнче Петроградра Володарские, 1918 çулхи август уйăхĕнче Урицкие вĕлернĕ эсерсене, В. И. Ленина тискеррĕн вĕлерме тăнăскерсене, хирĕç центрти паллăрах районсенче пурне те хĕрлĕ террор тунă.

Çакăн пек пулнă ют çĕршыв интервенчĕсемпе белогвардеецсене хирĕç кĕрешес ĕçри малтанхи çитĕнўсем.

* * *

Ленинпа Сталин, большевиксем çакна лайăх ăнланнă: ют çĕршыв захватчикĕсене Тăван çĕршывран тĕпĕ-йĕрĕпех хăваласа ямашкăн малашне çĕнĕ, татах та пысăкрах çапăçусем пулмалла, çавăнпа та пумайччен пымалли вăрçа пĕтĕм вăя хурса хатĕрленмелле. Çакна ăна пĕтĕм тыла фронт валли ĕçлеттернипе кăна тума май пулнă. Совет правительстви **вăрçăллă коммунизм туса хунă**. Çав вăхăтлăх пулнă мероприятисен шутне çаксем кĕнĕ: вăтам тата вак промышленноçа контроль тупи, уйрăм çынсем тырăпа суту-илў тăвассине чарни, продразверстка туни тата пур классемшĕн те пĕтĕмĕшле ĕç повинноçĕ туни. Çак вăхăтлăх ĕçсем Тăван çĕршыва хўтĕлесе хăварас ĕçре питĕ паха пулнă.

Пирĕн çĕршыв интервентсемпе белогвардеецсене хирĕç татăклăн кĕрешме хатĕрленнĕ вăхăтра Германире революци пулса иртнĕ. Çакă вăл Совет çĕршывĕн пурнăçне çăмăллатнă. Совет влаçĕ Брестри вăрă-хурахла мире пĕтерме, контрибуци тўлессине чарса лартма май илнĕ тата Эстоние, Латвие, Белоруссие, Литвана, Украинăна, Закавказье нимĕç захватчикĕсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларассишĕн уççăнах вăрçăллă тата политикăллă кĕрешў туса пыма пуçланă.

Партин Центральнăй Комитечĕ И. В. Сталин юлташа Украина фронтне организацилеме хушнă. 1918 çулхи ноябрь вĕçĕнче Украинăра повстанецсен войскисем петлюровецсене тата нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме тытăннă. Сталин ертсе пынипе, Харьков хулине ирĕке кăларнă. 1918 çулхи декабрĕн 10-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар Минск хулине ирĕке кăларнă.

Фронтри тата тылри мĕнпур оборона ĕçне ертсе пыма, промышленноçпа транспорта мобилизацилеме, çĕршыври пĕтĕм ресурссене мобилизацилеме 1918 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнче Рабочисемпе Хресченсен Оборона Советне тунă, ăна В. И. Ленинпа И. В. Сталин ертсе пынă.

* * *

1918 çул вĕçĕнче, Троцкий сутăнчăкла ĕçсем тунă пирки, хĕвелтухăç фронтĕнче лару-тăру питех те йывăрланса çитнĕ. Колчак çарĕ çурçĕртен килекен Англи çарĕсемпе пĕрлешме васканă. Çак катастрофăна пĕтерме, Ленин кăтартса панипе, партин Центральнăй Комитечĕ И. В. Сталинпа Ф. Э. Дзержинские сĕннĕ. Вĕсем çав катастрофăна хăвăрт пĕтернĕ, ун хыççăн Хĕрлĕ Çар Колчак çарне хирĕç наступлени вăйлатнă.

Хĕрлĕ Çар паттăррăн кĕрешнине çĕмĕрес шутпа Антанта империалисчĕсем пирĕн çĕршыва хăйсен пысăк çар вăйĕсене янă. Германи поражени тўснĕ тата унăн çарĕсене Украинăпа Закавказьерен кăларса сирпĕтнĕ хыççăн Англипе Франци хăйсен флотне Хура тинĕсе илсе килнĕ, хăйсен çарĕсене Одессăна, Закавказьене антарнă, совет халăхне тискерле асаплантарма, совет çыннисене ушкăнĕ-ушкăнĕпе персе пăрахма пуçланă. Вĕсем «вилĕм фабрикисем», тĕрмесемпе концлагерьсем тăва-тăва тухнă. Туркестана туртса илнĕ хыççăн интервентсем Бакури ертсе пыракан 26 большевик-комиссара тискеррĕн персе вĕлернĕ. Кăшт каярахпа интервентсем Российăна хирĕç блокада тăвасси çинчен пĕлтернĕ.

1919 çулхи çуркунне Антанта империалисчĕсем Совет çĕршывне хирĕç хăйсен пĕрремĕш походне пуçланă. Ун чухне Антанта Колчак адмирал çине хăйĕн Омскри çак пукане ставленникĕ çине пурнăçне ытла шанчă, çавăнпа ăна «Российăн верховнăй правителĕ» тунă. Колчака Российăри мĕнпур контрреволюци пăхăнса тăнă.

Колчакăн ку вăхăт тĕлне питех те пысăк çар пулнă, вăл Атăл патнех çитесе пуçланă. Ăна Юденич—Петроград патĕнче, империалистла Польша—Хĕвеланăçĕнче, Деникин—Кăнтăрта, Англипе Америка—Çурçĕрте çапăçса, пулăшнă.

Ленинпа Сталин, большевиксен партийĕ пĕтĕм совет халăхне Колчака тата ытти интервентсене хирĕç кĕрешме çĕкленĕ. 1919 çулхи апрельте пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар хăватлăн пырса çапнипе, Колчак çарĕ пысăк поражени тўснĕ, пĕтĕм фрончĕпех каялла чакма пуçланă.

Хĕрлĕ Çар чаплă çитĕнўсем тунă вăхăтра сутăнчăк Троцкий Колчак çарне хăваласине Уралта çитсен чарса лартма, çарсене кăнтăрти фронта куçарма сĕнў панă. Партин Центральнăй Комитечĕ унăн тăшманла сĕнĕвне сирсе янă, ăна хĕвелтухăç фронтĕнчи операцисене ертсе пырассиненчен пăрахма хушнă. Хĕрлĕ Çар ун хыççăн наступление вăйлатнă, Урала тата Çĕпĕре шуррисенчен ирĕке кăларнă. Ку ĕçре пирĕн çарсене тăшман тылĕнче çапăçакан партизансем пулăшнă.

Хĕрлĕ Çарăн Хĕвеланăç фронтри кĕрешĕвне вăйсăрлатас шутпа 1919 çулхи май уйăхĕнчĕ империалистсем Петроград çине тапăннă. Тăшман Петроград патнех çитме пултарнă.

Тăшмана отпор парас ĕçе организацилеме И. В. Сталина янă. Фронта коммунистсен кайнă. Сталин юлташ татăклă мерăсем йышăннипе Петроградшăн пулнă хăрушлăха хăвăрт пĕтернĕ.

Çак çĕнтерў Колчака хирĕç вăйлăрах кĕрешме май панă. Хĕрлĕ Çар 1919 çул вĕçнелле Колчак çарне тĕппипех çĕмĕрсе тăкнă. Колчака арестлесе, Иркутскра ревком приговорĕ тăрăх персе пăрахнă.

Сталин юлташ 1919 çулхи çулла Хĕвеланăç фронтĕнче, Смоленскра, белополяксене отпор парассине организацилет.

Интервентсен çарĕсенче революциллĕ шухăш-кăмăл сарăлнă, вĕсем хăйсен хуçисене хирĕç тăма пуçланă. Сăмахран, Франци моракĕсем Одессăра восстани тунă. Империалистсен Одессăри десанта каялла илсе каймалла пулнă.

Антанта империалисчĕсем иккĕмĕш походра Совет республикине хирĕç кĕрешес шанчăка кăнтăрта, Кубань районĕнче çапăçнă Деникин генерал çине хунă. Англин ун чухнехи çар министрĕ Черчилль мухтанса «вунтăватă государство походĕ» тесе ят панă çак поход 1919 çулхи кĕркунне пуçланнă. Хĕрлĕ Çар Колчака хĕвелтухăçĕнче çĕмĕрсе пынă вăхăтра Деникин Донбаса туртса илнĕ, Украинăпа сарлака фронтпа кĕрсе кайнă. Сутăнчăк Троцкий Кăнтăр фронтри ĕçе те юхăнтарса янă, çавна пула пирĕн çарсем поражени тўсме пуçланă. Деникин Орĕла тытса илнĕ, Тула патне çывхарса пынă. Тăшман Мускава тўрремĕнех хăратса тăнă. Белополяксем ку вăхăтра Минск хулине туртса илнĕ. Юденич Петроград патĕнче çĕнĕрен наступлени пуçланă.

Совет республикин пурнăçĕ йывăр пулнă. Пирĕн парти çак хăрушă вăхăтра мĕнпур халăха шуррисем наступлени тунине чарса лартма, вĕсене отпор пама чĕннĕ. «Пурте Деникина хирĕç кĕрешме!»—çапла чĕннĕ Ленин партин Центральнăй Комитечĕ ячĕпе.

Деникина çапса çĕмĕрес ĕçе организацилеме Центральнăй Комитет фронта Сталин, Ворошилов, Орджоникидзе, Буденнăй юлташсене янă. «Революци полководецĕ фронтра йĕркесĕрлĕх, çапалан-чăклăх пулнине, стратегиллĕ план çуккине курать. Троцкин панкрута тухнă çыннисене штабран хăваласа кăларса тата фронт ĕçĕсене Троцкие пачах хутшăнтармалла мар туса, Деникин фронтне Атăл (Царицын) патĕнчен Новороссийск урлă кайса çĕмĕрсе кĕмелли сиенлĕ кивĕ плана сирсе пăрахнă та, Сталин кĕрешў планне хăй тунă, çак план вара задачăна генилле татса панă. Сталин, контрреволюцин çарне икĕ пая уйăрса ярас тесе, Деникина çапса аркатмалли тĕп вăйа Воронеж районĕнчен Харьков—Донбасс—Ростов урлă яма сĕннĕ» (И. В. Сталинăн кĕске биографийĕ; 78 стр.).

Сталин юлташăн планне пурнăçа кĕртнипе Деникина çĕмĕрсе тăкнă. Çав вăхăтрах большевиксен партийĕ ертсе пынипе Хĕрлĕ Çар чăсĕсем Юденича Петроград патĕнче çĕмĕрсе тăкнă. Антантăн иккĕмĕш походĕ те интервентсене тата белогвардеецсене çапса аркатнипе вĕçленнĕ.

Деникина çапса аркатнă хыççăн И. В. Сталин, В. И. Ленин хушнипе, Украинăн вăрçă ишĕлтернĕ хуçалăхне ура çине тăратас ĕçе ертсе пырать.

Антанта империалисчĕсене совет влаçне сирпĕтсе антарас ĕмĕт çав-çавах канăç паман. Вĕсем 1920 çулхи çуркунне çĕнĕ поход—виççĕмĕш поход пуçласа янă. Ку походра вара Польша панĕсем тата белогвардеецсен генералĕ Врангель тĕп вăй пулнă. «Ленин каланă тăрăх, пансен Польшипе Врангель—Совет çĕршывне пăвса пăрахма хăтланнă тĕнчери империализмăн икĕ алли пулнă» (И. Сталин).

Антантăн виççĕмĕш походне те Сталин юлташах çĕмĕрсе тăкнă. Вăл Польша фронтне çĕмĕрсе кĕрес, Киева ирĕке кăларас тата пирĕн çарсене Львов патне çывхартас ĕçе тўрремĕнех хутшăнать, çĕнтерĕве организацилет, Врангеле пĕтерсе тăкмалли плана палăртса хурать. Сталин кăтартса панисем Фрунзе хатĕрленĕ оперативнăй планăн никĕсĕ пулса тăнă, çав план тăрăх Врангеле çĕмĕрсе такна.

Çапла вара, социализм çĕршывĕ çине пĕтĕм тĕнчери капитал пирвайхи хут вăрçăпа тапăнни путланса ларнă. Çамрăк Совет республики çĕнтерў тунă, хăйĕн ирĕкĕпе никама пăхăнманлăхне паттăррăн сыхласа хăварнă.

Совет çĕршывĕ çак чаплă çĕнтерўсене большевиксен партийĕ хавхалантарса пынипе, Ленинпа Сталин генилле ертсе пынипе турĕ. Ленинпа Сталин граждан вăрçин пур çулĕсенче те пĕр-пĕринпе çывăх тăрса ĕçленĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çара туса хунă, çирĕплетнĕ. Фронтри ĕçсем уйрăмах йывăрланса çитсен, Сталин ялан ах Ленинпа канашланă. И. В. Сталин ыйтнисене В. И. Ленин питех те тимлĕн шута илсе пынă. Совет çĕршывĕн оборонине организацилес ĕçре Сталин юлташ Ленинăн тĕп тĕрекĕ пулнă. «Революци кун-çулне татса паракан фронтсене парти яланах Сталин юлташа янă. Вăл стратегиллĕ чи паллă плансене тăвакан пулнă. Ĕçе татса паракан операцисене Сталин ертсе пынă. Царицынпа Пермь патĕнче, Петроград патĕнче тата Деникина хирĕç, хĕвеланăçĕнче пансен Польшине хирĕç тата кăнтăр енчен Врангеле хирĕç—пур çĕрте те Сталинăн хурçă пек çирĕп ирĕкĕ тата стратегиллĕ генийĕ революцие çĕнтерў тума майсем панă. Сталин çар комиссарĕсене вĕрентсе çитĕнтерекенĕ тата ертсе пыраканĕ пулнă. Ленин палăртнă тăрăх, çар комиссарĕсем пулман пулсан, Хĕрлĕ Çар та пулман пулĕччĕ.

Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн чи чаплă çĕнтерĕвĕсем Сталин ячĕпе çыхăнса тăраççĕ» (И. В. Сталинăн кĕске биографийĕ, 83—84 стр.).

* * *

Аслă Отечественнăй вăрçăра Совет Çарĕ Сталин юлташ ертсе пынипе гитлерла Германипе, империалистла Япопие—пĕтĕм тĕнчери империализм пирĕн социализмлă çĕршыв çине вăрçăпа иккĕмĕш хут тапăннине çапса çĕмĕрчĕ. Октябрьти революцире çуралнă социализмлă стройăн пурнăçлă вăйĕсем, совет стройĕн хăвачĕпе тĕрекĕ, большевиксен партийĕн иксĕлми вăйĕ çав йывăр çулсенче тепĕр хут яр-уççăн курăнчĕ. Совет халăхĕ халĕ хăйĕн Тăван çĕршывĕн вăй-хăватне татах тĕреклетессишĕн ырми-канми ĕçлет, çĕнĕ вăрçă чĕртме ĕмĕтленекенсен ирсĕр ĕçĕсене чунтан-чĕререн питлет. Мухтавлă Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ государство интересĕсене шанчăклăн хўтĕлесе тăраççĕ.

«Империалистла государствăсем пирĕн çĕршыв çине вăрçăпа тапăнни кашни хутрах вĕсен ĕçĕ путланса ларнипе вĕçленнĕ пулсан, халĕ вара пирĕн государство татах та вăйлăрах, хăватлăрах, пирĕн халăх тачăрах пĕрлешнĕ тата хăйĕн вăйĕсем çине шанса тăрать. Вăрçă синчен сухăрашса тăн сухатнă господасем çакна пĕлсе тăмчăр: вĕсем пирĕн çĕршыв çине тапăнас пулсан, совет халăхĕ вĕсене пирĕн социализмлă Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне тапăнас айван шухăшĕсене ĕмĕрлĕхех пăрахтармалла тăвĕ...—терĕ Л. П. Берия юлташ.—Коммунизм строительствин аслă программине пурнăçлассишĕн кĕрешсе, совет халăхĕ хăйĕн тăван коммунистла партийĕ тавра, пирĕн çĕнтерўсен хавхалантараканĕпе организаторĕ—аслă Сталин тавра тата тачăрах пĕтĕçрĕ».

А. ГУСЕВ.

Демократиллĕ Германи Республикин Правительстви СССР, США, Великобритани тата Франци Правительствисене чĕнсе каланă пирки Совет Правительстви панă ответ

Февралĕн 13-мĕшĕнче Демократиллĕ Германи Республикин Правительстви СССР, США, Великобритани тата Франци Правительствисене Германипе мирлĕ договор тăвас ĕçе васкатма ыйтса çыру янă. Унта: Гитлерла Германи парăннăранпа 7 çула яхăн иртрĕ, анчах Германипе çаçлах мирлĕ договор туман-ха, çавăн пирки Германи халăхĕн хăйĕн пĕрлĕхлĕ, никама пăхăнман, мире юратакан тата демократиллĕ государствине туса хума май килмест, тенĕ.

Демократиллĕ Германи Республикин Правительстви тăвата держава Правительствисем вăл Германипе мирлĕ договор тăвас ĕçе васкатма ыйтнине тимлĕ пăхса тухассине, вăл ыйтнипе килĕшессине шанса тăни çинчен пĕлтернĕ.

Совет Правительстви хушнипе ССР Союзĕн Берлинри дипломати миссийĕн пуçлăхĕ Г. М. Пушкин февралĕн 20-мĕшĕнче Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министрне Отто Гротеволе СССР Правительстви çав чĕнӳ пирки çырнă ответа панă. Унта çапла каланă:

«Совет Правительстви Демократиллĕ Германи Республикин Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас ĕçе васкатас пирки Совет Союзĕ, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Великобритани тата Франци Правительствисене чĕнсе калания илни çинчен пĕлтерет.

Совет Правительстви Демократиллĕ Германи Республикин Правительствин позицийĕпе, унăн чĕнĕвĕнче каласа панă позицине килĕшет, вăрçă чарăннăранпа 7 çула яхăн иртнĕ вăхăтра Германипе тунă мирлĕ договор çукки тата Германи государстви темиçе пая пайланнипех юлни — вăл пачах та йĕркеллĕ мар лару-тăру тесе шутлать. СССР Правительстви пĕр тăхтаса тăмасăр Германипе, Потсдамра йышăннă Постановленисем тăрăх тата Германие хутшăнтарса, мирлĕ договор тума кирлĕ тесе шутлать, çак ĕçе туни Европăри мире юратакан мĕнпур халăхсен интересĕсемпе килĕшӳллĕ пуласси не шанса тăрать.

Германипе мирлĕ договор туни Европăри мире тĕреклетес ĕçшĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшллĕ пулнине шута илсе, Совет Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас тата Германи государствине çĕнĕрен пĕр çĕршыв туса хурас ĕçе васкатма хăй енчен пур майсемпе те тăрăшĕ, мĕн тума май килнине пĕтĕмпех туса пырĕ.

Совет правительстви Германире контроль ĕçне пурнăçласа тăракан ытти державăсем те ку енĕпе тивĕçлĕ ĕçсем тăвассине кĕтет».

Нимĕç халăхĕ Демократиллĕ Германи Республикин правительстви тăватă аслă державăн правительствисене чĕнсе каланине ырлать

БЕРЛИН, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви çапла пĕлтерет: Демократиллĕ Германи Республикинчи Нациллĕ фронтăн Совечĕ Демократиллĕ Германи Республикин правительстви тăватă аслă державăна чĕнсе каланă май çакăн пек лозунгсем пичетлесе кăларнă:

Нимĕç халăхĕн мирлĕ договор тума право пур. Нимĕç халăхĕн пĕр патриочĕ те çав правăна йышăнмасăр тăма пултараймасть.

Германипе мирлĕ договор туни Хĕвеланăç Германие çĕнĕрен хĕçпăшаллантарас ĕçе чарса лартассине пĕлтерет. Çавăнпа та мире юратакан кашни нимĕç *хамăр правительствăн требованине пурнăçлассишĕн кĕрешет.*

Нимĕç халăхĕ граждански вăрçа хирĕç. Çавăнпа вăл мирлĕ договор тума пĕр шухăшлă пулса ыйтать.

Мирлĕ договор тума тата Германи пĕрлĕхне çĕнĕрен тума ыйтни — пĕтĕм нимĕç халăхĕн требованийĕ.

Нимĕç халăхĕ мĕнпур халăхсемпе мирлĕ пурăнасшăн. Çавăнпа вăл Германипе мирлĕ договор тума ыйтать.

Хĕрарăмсемпе ача амăшĕсем! Германипе мирлĕ договор тутарассишĕн кĕрешĕр. Çакă вăл эсир хăвăр мăшăрусене тата ачусене сыхласа хăварма тăрăшни пулать.

Пĕтĕм Германири çамрăксем! Эсир мирлĕ пурнăçра ĕçлесе пурăнасшăн тата вĕренесшĕн. Çавăнпа та мирлĕ договор тутарассишĕн тата хамăрăн тăван çĕршыва çĕнĕрен пĕрлештерессишĕн кĕрешĕр!

Нимĕç халăхне тупăсем кирлĕ мар, ăна тракторсем кирлĕ, нимĕç халăхне Америка вăрçи кирлĕ мар, ăна мир кирлĕ. Çавăнпа та вăл мирлĕ договор тума çине тăрса ыйтать.

Нимĕç халăхне танксем кирлĕ мар, ăна плугсем кирлĕ. Çавăнпа та вăл мирлĕ *договор тума çине тăрса ыйтать.*

Мирлĕ договор туни пĕтĕм Германин мирлĕ экономикине хăвăрт вăйлатасси тата халăх пурнăçне лайăхлатасси патне илсе пырать. Мирлĕ договор нимĕçсен промышленноçне, ялхуçалăхне, нимĕçсен аласта ĕçне, нимĕçсен наукипе искусствине аталантарма май парать.

Мирлĕ договор çĕршыв зонăсемпе секторсене пайланса тăнине, зонăсемпе секторсен чиккисене пĕтерме, уйрăм зонăсенче тĕрлĕ йышши укçа пулнине пĕтерме май парать.

Совет Çарĕ 34 çул тултарнă ятпа Копенгагенра Данипе Совет Союзĕ обществин пухăвĕ пулнă

КОПЕНГАГЕН, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Çарĕ 34 çул тултарнă ятпа ĕнер Копенгаген хулинче Данипе Совет Союзĕ обществи членĕсен пухăвĕ пулнă. Пуху пулса иртмелли зала ССР Союзĕн тата Дании государство ялавĕсемпе илемлетнĕ.

Пухура Данипе Совет Союзĕ обществин председателĕ Йорген Йоргенсен профессор сăмах тухса каланă. Вăл Совет Çарĕ гитлерла Германие аркатса тăкас, Европăри халăхсене, çав шутра Дани халăхне те, гитлерла оккупацирен хăтарас тĕлĕшпе питĕ пысăк ĕç тунине палăртнă.

«Паян Совет Çарĕн кунне уявласа, эпир, Дани çыннисем, Совет Çарне Данине нацистсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнăшăн чунтан-чĕререн тав тăватпăр», тенĕ вăл.

Совет Çарĕ çинчен Пĕтер Роде писатель доклад тунă.

Вьетнам Халăх çарĕн штабĕ пĕлтерни

ШАНХАЙ, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Вьетнам информаци агентстви Çурçĕр Вьетнамран çапла пĕлтерет:

Вьетнам Халăх çарĕ штабĕн юлашки пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, Франци çарĕн Хоа-Бинь провинцине оккупациленĕ вăхăтранпа, 1951 çулхи ноябрь уйăхĕн варринчен пуçласа 1952 çулхи февралĕн 14-мĕшчен Çурçĕр Вьетнамри фронтра 17 пин çын ытла вилнĕ тата тыткăна лекнĕ. Вьетнам çарĕн чаçĕсем 13 самолет персе ӳкернĕ, 17 танк, 208 броневикпа грузовик пĕтернĕ, 12 карап шыва путарнă, тупăсемпе минометсем 80 ытла пĕтернĕ е тытса илнĕ, 1.165 пулемет тата ытти çар материалĕсемпе çар хатĕрĕсене нумай пĕтернĕ е тытса илнĕ Çав тапхăр хушшинче тăшманăн 176 пысăк позицийĕсене пĕтерсе тăкнă е тытса илнĕ.

Колумбири граждан вăрçи

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Колумбирен юлашки вăхăтра илнĕ хыпарсем тăрăх, унта граждан вăрçи анлă сарăлса пырать. Иртнĕ эрнере Колумби правительстви хĕвелтухăçĕнчи айлăмри облаçсем урлă каçса çӳреме чарнă, çав облаçсем урлă калкан тип çĕр çинчи çулйĕрсем тăрăх та, сывлăшри çул-йĕрсем тăрăх та çӳремелле мар, тесе пĕлтернĕ. Çак фактран Колумбире лару-тăру йывăрланса çитни курăнать.

Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Богота хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Сантандер провинцийĕн çурçĕрти пайĕнче правительствăна хирĕç кĕрешекенсен ушкăнĕпе полици отрячĕ пĕр-пĕрне хирĕç çапăçнă.

Çар министрĕ Бернаоль хальхи вăхăтра Колумбире «чăн-чăн революци пулса пыни...» çинчен каларĕ, тет корреспондент. Çар министрĕ хальхи вăхăтра правительствăна хирĕçле ушкăнсем Толима, Антиокия, Кундинамарка, Бояка, Сантандер-дель-Норте, Сантандер-дель-Сур, Уила, Каука, Калдас, Магдалена провинцийĕсенче тата хĕвелтухăçри айлăмсенчи районсенче кĕрешни çинчен каласа панă.

Трансиорданири коммунистсен партийĕн руководителĕсене суд тăвассĕ

ТЕЛЬ-АВИВ, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Амман хулинче Трансиорданири коммунистсен партийĕн руководительне Фуад Нассара тата ытти коммунистсене суд тума тытăннă. Суда никама та кĕртмессĕ.

«Кол гаам» хаçат çапла пĕлтерет: тимĕр тăлăпа тăлланă Фуад Нассарпа унăн юлташĕсем суд залне «Интернационал» юрласа пырса кĕнĕ. Çав юрă кĕвĕпе илтсен, судья унта пухăннă нумай йышлă халăха залран тухса кайма хушнă; суд тунă çĕре никама та кĕртмелле мар, тесе пĕлтернĕ. Влаçсем, хуларн халăх демонстрацисем тăвассинчен хăраса, Амман хулинчи урамсенче çӳреме чарнă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ февралĕн 19-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те тăшмана хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ.

Ĕнер Халăх çарĕн соединенийĕсем хĕвелтухăçĕнчи фронтăн пур участокĕсенче те тăшмана хирĕç тупăсемпе тата пулеметсемпе пенĕ, тăшман та Халăх çарĕн чаçĕсене хирĕç тупăсемпе тата пулеметсемпе пенĕ. Тăшман танкĕсем Халăх çарĕ оборонин малти пайĕ çине наступлени тума хăтланнă. Халăх çарĕн артиллери чаçĕсем тупăсемпе вăйлă персе тăшман танкĕсене каялла чакарнă.

Паян Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем тăшманăн 4 истребительне персе ӳкернĕ, çав истребительсем умчен, ытти самолетсемпе пĕрле, Нампхо, Сунань тата Вонсан районĕсене тапăннă пулнă.

ПХЕНЬЯН, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ февралĕн 20-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле тăшмана хирĕç халиччен вырăнсенчех оборонăра тăрса çапăçаççĕ.

Хĕвеланăçĕнчипе вăтаçĕрти фронтсен хăшпĕр участокĕсенче юлашки икĕ кун хушшинче — февралĕн 19-мĕшĕпе 20-мĕшĕнче — тăшман, танксемпе артиллери пулăшнипе, атакăсем тума хăтланнă. Халăх çарĕн чаçĕсем тăшман атакисене анăçлă сире-сире янă, тăшман салтакĕсене нумай пĕтернĕ.

Корея Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернĕ, çав самолетсем умчен, ытти самолетсемпе пĕрле, Корейăри тĕрлĕ районсене тапăннă пулнă.

Корейăри вăрçă çинчен Англи салтакĕ каласа пани

ПРАГА, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Телепресс агентствин Лондонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Лондонри «Дейли уоркер» хаçат Англин халĕ çеç Корейăран таврăннă салтакĕ Д. Н. Бродуэй каласа пани çинчен статья пичетлесе кăларнă. «Корейăри кампани — вăл тĕтĕмшах вут-хĕм айĕнче çунни», тенĕ Бродуэй. Вăл Англи салтакĕсене хăйсене тумтир паманни, вĕсем сивĕре йăлăнас тесе хăйсен аллине мĕн лекнĕ, çавсене пĕтĕмпех çунтарни çинчен каласа панă. «Эпир сивĕре хытă шăннипе тем те пĕр — рис, тырă тата çурт-йĕрсене çунтараттăмăр», тенĕ вăл.

Бродуэй Çурçĕр Корейăри пурнăç кăмтăр Корейăринчен пачах урăхла пулни çинчен каласа кăтартнă. «Корейăн çурçĕрти пайĕнче эпир пурнăçа юсама тăрăшнине — тĕнчери иккĕмĕш вăрçă хыççăн çĕнĕрен лартнă çирĕп çуртсене, юсаса тирпейлене хуласемпе чугун çулсене куртăмăр. Кăнтăр Корейăра пур çĕрте те тăмран тунă пӳртсем çеç, унта хуçалăха юсас тĕлĕшпе нимĕн те туман», тенĕ вăл.

Тунисри ĕçсем

ПАРИЖ, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Парижра иркине тухнă хаçатсем çинче çырнă тăрăх, Тунисра халĕ те лару-тăру йывăр. Францин колонири влаçĕсем хĕсĕрленине хирĕç Тунис халăхĕ хăйн ирĕклĕхĕшĕн татах та вăйлăрах кĕрешнипе ответлет.

«Либерасьон» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Сфакс хулинче студентсен манифестацийĕ пулнă. Студентсем Тунисра нациллĕ никама пăхăнманлăх йĕрке тума ыйтнă. Полици 34 студента арестленĕ.

Сус хулинче муниципальнăй советăн вице-председателĕн çуртĕ çине граната пăрахнă. Гафс хулинче полици хулана шанчăксăр çынсенчен тасатас тĕлĕшпе ухтарса çӳренĕ, 21 çынна тытса хупнă. Тивĕс çыранĕсенчи хуласемпе ялсенче ухтарса çӳренĕ чухне полици 39 патриота арестленĕ. Вĕсене пурне те çар трибуналĕ аллине панă.

«Юманите» хаçат Тунисри коммунистсен партийĕн пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерӳре Франци полицийĕ Тунис патриочĕсене тытса хупнине хирĕç, Тунис халăхĕн наци ирĕклĕхĕшĕн пыракан юхăмĕн руководителĕсене ссылкăна янине хирĕç протестленĕ.

Пĕлтерӳре Тунисри коммунистсен партийĕн тата ытти партисен ссылкăна янă руководителĕсем февралĕн 17-мĕшĕнче апат çиме пăрахса, хăйсене çĕршывăн пушхирлĕ районне ссылкăна янине хирĕç протестлени çинчен каланă.

Тунисри генеральнăй резидентăн канцелярийĕ Францин колонири влаçĕсем Тунисра çĕнĕ концентраци лагерĕсем уçни çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ.

«Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Францири «Фам франсэз» ятлă демократиллĕ журналăн ответлă редакторне Элиза Фрейса Францин Тунисри влаçĕсем çар трибуналне парса судпа айăплама шутланă. Францири тата Тунисри демократсем Францири хĕрарăмсен журналĕн руководительне ирĕке кăларма требовани лартнă. Кун хыççăн влаçсем Элиза Фрейса Тунисран Францие ăсатнă. Çакна Францири тата Тунисри демократсен çĕнĕ çĕнтерĕвĕ тесе хаклаççĕ.

Франци парламентĕнче

ПАРИЖ, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Франци парламенчĕ «Европа çарне» тăвасси çинчен сӳтсе явнă. Фор ертсе пыракан правительствăна шанмалла-и е шанмалла мар-и текен ыйту тухса тăнă. Правительствăна шанассишĕн 327 депутат, правительствăна шанассине хирĕç 287 депутат сасăланă.

Наци пухăвĕнчи реакциллĕ ушкăнсем нумай вăхăт хушши пĕр-пĕрипе вăрттăн канашланă. Канашлу хыççăн Фор Наци пухăвĕнче «Европа çарне» тăвас ĕçе хутшăнмалли политикăна йышăнтарма пултарнă. Сылтăм социалистсен парламентри ушкăнĕ правительство «Европа çарне» тăвас пирки тăратнă проектпа килĕшнĕ, ăна йышăнассишĕн сасăланă. Çавна пула çеç Фор правительстви влаçра тытăнса юлнă.

«Европа çарне» тăвасси çинчен парламентра сӳтсе явасси мĕнле пулса иртни çинчен хаçатсем нумай çыраççĕ. Хаçатсем çырнă тăрăх, асăннă ыйтăва сӳтсе явнă вăхăтра Наци пухăвне правительство çĕнĕ проекта йышăнтарас шутпа пур майсемпе те хистенĕ. Буржуалла хаçатсем: «Европа çарне» тăвас ыйтура Фор правительствине шанас мар тесе йышăнсан, пире Вашингтон хĕсме пултарать, тесе хăратса çырнă. «Çакă вăл Франци пĕтĕмпех пĕччен тăрса юлассине пĕлтерет», тесе çырнă «Фигаро» хаçат.

Анчах правительство хăйĕн çĕнĕ резолюцийĕнче икĕ питленсе каланине сылтăмри партисен хаçачĕсем те йышăнмалла пулнă. «Комба» хаçат правительствăн çĕнĕ резолюцине «нимĕ юрăхсăр резолюци» тесе хаклать. Ăна Франци правительстви Германи çарне тунипе хăй килĕшнине халăхран пытарса тăрас шутпа çырнине палăртса, «Комба» хаçат: «Германи çарне пурпĕрех тăваççĕ», тет.

Францири анлă общественноçăн шухăш-кăмăлне палăртса, демократиллĕ хаçатсем Францири реакци Вашингтонран хушнă тăрăх маневрсем туса хăтланнине, Хĕвеланăç Германие çĕнĕрен хĕçпăшаллантарас ĕçе хăвăртлатма хăтланнине хытă сивлеççĕ.

Лиссабонра Çурçĕр Атлантика союз совечĕн сессийĕ уçăлнă

ПАРИЖ, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, паян Лиссабонра Çурçĕр Атлантика блок Совечĕн черетлĕ сессийĕ уçăлнă. Çак совет — Америка империалисчĕсем пуç пулса тăракан агрессиллĕ союзăн ертсе пыракан органĕ. Совет сессине Атлантика блокĕнче тăракан 14 государствăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсем, çар министрĕсем тата финанс министрĕсем пухăннă.

Сесси уçăлас умĕн Америка деятелĕсем хăйсен «союзникĕсем» хушшинче тимлĕ ĕçленĕ. Католиксен организацийĕн «Куотидиано» хаçачĕ: «Америка пур енĕпе те Германие хĕçпăшаллантарас çул çине тăчĕ, вăл Хĕвеланăç Германин 12 дивизийĕ çине ытларах шанать, Хĕвеланăçри ытти мĕнпур государствăсен çарĕсене ун чухлĕ шанмасть», тесе çырнă.

Вашингтонри правительсем Германин çĕнĕ çарне çăмăллăнах туса хума шутланă пулсан, ку вăл — çăмăл ĕç мар пулни палăрнă. Хĕвеланăç Германие çĕнĕрен хĕçпăшаллантарас политика Хĕвеланăç Европăри халăхсене шиклентерет, çав политика пирки унти халăхсем хытăрах та хытăрах тарăхаççĕ. Хĕвеланăç Европăри государствăсен правительствисем хăйсен çĕршывĕсенчи халăхсем тарăхса пынинчен хăраса ӳкнĕ, çавăнпа та вĕсем ку ыйту тăрăх Вашингтонри правительсемпе килĕшӳ тума васкаман. Бонри правительсем «Европа çарĕ» валли салтаксем пама килĕшнĕ, анчах вĕсем хăйсен чылай требованийĕсене кăларса тăратнă, Хĕвеланăç Европăри государствăсем хальхи вăхăтра çав требованисемпе килĕшме пултараймаççĕ.

Хĕвеланăç Германири иртнĕ вăрçăшăн тавăрма ĕмĕтленекенсене агрессиллĕ ĕçсене пурнăçлама хутшăнтармашкăн Америка дипломачĕсен çĕнĕ майсем шырама тивет. Çĕнĕ майсем тунипе вĕсем хăйсен чăн-чăн тĕллевĕсене Хĕвеланăç Европăри çĕршывсенчи тата США-ри халăхсенчен пытарса тăма, вăрттăн майсемпе усă курса хăйсен ĕçĕсене пурнăçлама тăрăшаççĕ. Америка дипломачĕсем Хĕвеланăç Германие Çурçĕр Атлантика блокне сĕтĕрсе кĕртесшĕн. Çакă вара Лиссабонри сессин тĕп тĕллевĕ пулать.

Çурçĕр Атлантика советĕнче пăхса тухса çирĕплетме «Европа çарне» тăвас пирки çырса хатĕрленĕ протокола тăратаççĕ. Ăна Çурçĕр Атлантика союзĕн тĕрлĕ комитечĕсем çырса хатĕрленĕ. Протоколта «Европа çарĕ» текенскерне Франци, Итали, Хĕвеланăç Германи, Бельги тата Люксембург çарĕсене кĕртме палăртнă, унта хăш çĕршывăн мĕн чухлĕ çар пулмалли çинчен каланă. Голландипе Бельги «Европа çарне» тумалли проекта хирĕç тăраççĕ. Англи «Европа çарне» тăвас ĕçе хутшăнма килĕшмен.

Çапах та, пулас «Европа çарĕпе» Çурçĕр Атлантика союзĕ хушшинчи çыхăнусене йĕркелес сăлтавпа, Лиссабонри сессире чăннипе Хĕвеланăç Германи çарне тăвасси *çинчен сӳтсе яваççĕ.* Унта Хĕвеланăç Германи çарне ертсе пыма ĕлĕк Гитлер генералĕсем пулнă çынсене уйăрса лартма хатĕрленеççĕ, вĕсене васкасах Хĕвеланăç Германири тĕрмесенчен ирĕке кăлараççĕ.

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, сессире Çурçĕр Атлантика блокĕнче тăракан кашни çĕршывăн çар базисемпе аэродромсем тума мĕн чухлĕ укçа памалли çинчен сӳтсе явма палăртнă.

Халĕ уçăлнă сессие Грецине Турци представителĕсем те пынă.

Япони — США-н Инçет Хĕвелтухăçĕнчи агрессиллĕ ĕçĕсен бази

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Японин çар промышленноçне юсаççĕ тата Японие интервентсен Корейăри çарĕсен бази туса хума тăрăшаççĕ. Ку пирки çырса, «Дейли ньюс» хаçатăн корреспонденчĕ Льюис Вашингтонран çапла пĕлтерет: Америкăн Инçет Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕн çар хатĕрĕсем туянас тĕлĕшпе ĕçлекен органĕ Японире 400 миллион долларлăх йĕрпăшал туса хатĕрлеме «заказ панă тата заказ пама хатĕрленет».

Çав заказсене пурнăçланă май Америкăн Корейăри хĕçпăшаллă вăйĕсем Японирен самолетсем, минометсем, бомбăсем, пулеметсем, снарядсем, минăсем, торпедăсем илсе тăма пуçлаççĕ.

Америка çар заказĕсене Накаэзима заводĕсем пурнăçлама килĕшнĕ. Ку заводсем тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вăхăтĕнче истребительсем туса кăларнă. Кобе, Нагасаки тата Иокогама хулисенчи хурçă шăратакан заводсем те Америка заказĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнаççĕ. Çав заводсене çĕнĕрен темиçе пин японеца ĕçе илеççĕ. Корреспондент каланă тăрăх, Америкăри уйрăм хуçасен компанийĕсем Японире çар хатĕрĕсем тума заказсем пама шутлаççĕ, Японире вара çав заказсене пула «çитес уйăхсенче Япони утравĕсем çине Америка долларĕсене нумай илсе пырассине» кĕтеççĕ.

Японие «Америкăн Инçет Хĕвелтухăçĕнчи крепоçĕ» туса хурса, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем халĕ Лăпкă океан тăрăхĕнчи чылай çĕршывсен представителĕсемпе «Лăпкă океан тăрăхĕнчи çĕршывсен çарне» тăвасси çинчен сӳтсе яваççĕ. Ку çар вара «Европа çарĕ» пек пулмалла. «Лăпкă океан тăрăхĕнчи çĕршывсен çарне» тумалли проекта йышăнтарма йывăр пулать, çăмахран, çав «çара» тунă çĕре Австрали «хутшăнасшăн мар», Австрали хăйĕн территорине Япони салтакĕсене кĕртесшĕн мар, тесе çырать корреспондент.

Канадăра США валли самолетсем тăваççĕ

ВИННИПЕГ, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Канада правительстви Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен «Ф-86» йышши истребительсем туса пама пысăк заказ илни çинчен пĕлтернĕ. Ку заказ мĕн чухлĕ тăни çинчен тĕплĕн каласа паман, анчах Канада нумай миллион долларлăх заказ илнине, çав укçа Канада США-ра туянакан çар хатĕрĕсемшĕн тӳлесе татма çитнине уйрăмах палăртнă. Пĕлтерӳре çав заказа халех пурнăçлама тытăнасси, Монреалти авиаци заводĕ халĕ туса кăларакан истребительсене США-на парса тăрасси çинчен каланă.

Америка Ирана хĕсет

ЛОНДОН, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Тегеранра пресс-конференци пулнă, унта Иран правительствин представителĕ Бушери сăмах тухса каланă. Экспортпа импорт банкĕ Ирана укçа кивçен парас мар тесе хăй решени йышăнни çинчен Иран правительствине пĕлтерчĕ-и, тесе ыйтнине хирĕç Бушери: Иран çав банкран укçа кивçен илессине «шанма пăрахрĕ», тесе ответленĕ.

Банк укçа кивçен пама килĕшменни çинчен Иранри хаçатсем нумай çыраççĕ, савна «нефть пирки пыракан хирĕçĕве» йĕркелес ĕçре — Ирана хĕсес шутпа тунине палăртаççĕ.

Иран нефчĕ пирки пыракан калаçусем çинчен

ТЕГЕРАН, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). «Эттелаат» тата «Иран» хаçатсем февралĕн 18-мĕшĕнче Америкăн Иранри посолĕ Гендерсонпа Иран ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Каземи тĕл пулса калаçни çинчен нумай çыраççĕ. «Иран» хаçатра çырнă тăрăх, çав калаçусем вăхăтĕнче Гендерсон «США правительстви Иранри нефть ыйтăвне Иранпа Тĕнчери çĕршывсен реконструкципе аталану банкĕн представителĕсем пĕр-пĕринпе калаçнă чухне йĕркелесе çитерессипе хытă интересленет», Иран правительствин «кирек мĕнле пулсан та, çав банк сĕнекен условисене йышăнмалла», тесе каланă.

Шоферсен ăмăртăвĕ

Йĕпреç вăрманпромхозĕнчи шоферсем сезон планне ирттерсе тултарас тĕлĕшпе ăмăртăва кулленех вăйлатса пыраççĕ. Вĕсем автомашинăпа вăрман кăлармалли плана куллен 150 процент тултараççĕ. Турттарнă çĕрте ĕçлекен 42 шофертан пĕри те нормăна тултараймасси çук. Бандаренко, Малкин, Овчейков, Кутузов, Барышев юлташсем 12 кубометр вырăнне 39—42 кубометр турттарса кăлараççĕ.

(Хамăр инф.).

Киоскенче ĕçлекенсен пĕлĕвне ӳстереççĕ

Иртнĕ çул республикăри район центрĕсенче хаçат-журнал сутмалли 25 киоск уçнă. Киоскенче ĕçлеме квалификациллĕ работниксем вĕрентсе хатĕрлес майпа республикăри «Союзпечать» уйрăмĕ вунă кунлăх курс иртторчĕ. Курсра 40 çын вĕренчĕ.

В. МИХАЙЛОВ.

Çĕнĕ юрăсем

Чăваш композиторĕсем — Ф. Лукин, Г. Лебедев тата А. Ходяшев юлташсем хорпа тата пĕччен юрламалли çĕнĕ юрăсем çырса хатĕрленĕ. Композиторсен февралĕн 19-мĕшĕнче пулнă пухăвĕнче çав юрăсене итлерĕç. Хор малтан Ходяшев çырнă Сталин çинчен хывнă юрра (сăмахĕсем В. Давыдовăн) юрласа пачĕ. Унтан Лебедевăн «Сталинград» (сăмахĕсем В. Давыдовăн), Ф. Лукинăн «Сарă тулă пуссинче» (сăмахĕсем В. Веселовăн) юррисене итлерĕç.

Композиторсем çак çĕнĕ произведенисене тĕплĕн сӳтсе яврĕç: Лукинпа Ходяшев çырнă юрăсене лайăх тесе йышăнчĕç, Лебедев композитора хăйĕн юррине кăштах урăхлатма хушрĕç.

Бунсăр пусне Лебедевпа Ходяшев çырнă пĕччен юрламалли юрăсене итлерĕç. Лебедев çырнă «Юрă» тата «Эх, тальянка» юрăсене юрларĕç. Ходяшев çырнă «Юхан шывĕ хĕрринче» ятлă юрра лайăхлатма хушнă.

Пчеловодсен курсĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Районти колхозсенче хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç çултан-çул вăйланса пырать. Кăçал кашни колхозра утар организацилес задача лартнă.

Ялхуçалăх пайĕ утарсенче ĕçлекенсен квалификацине ӳстерме, çĕнĕ кадрсем хатĕрлеме пĕр уйăхлăх курс организацилерĕ. Унта халĕ 15 колхозник вĕренет. Курсра вĕренекенсем хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçри малта пыракансен опычĕ, утарсенчи ĕçе йĕркелесси çинчен агроном-пчеловодсен лекцийĕсене итлеççĕ.

Тилĕ ферми

ВĂРНАР. Упнерти Жданов ячĕпе тăракан колхозра темиçе çул хушши ĕнтĕ хура-хăмăр тилĕсем ĕрчетеççĕ. 1951 çулта тилĕсен шучĕ 30 çитнĕ. Колхоз вăл шутран 11 тилĕне государствăна сутса тупăш илнĕ.

Тилĕ ферминче ĕçе кăтартуллă йĕркеленĕ. Кунта иртнĕ кунсенче республикăри тилĕ фермисенче ĕçлекенсен 5 кунлăх семинарĕ пулса иртрĕ. П. ТИХОНОВ.

ĔÇÇЫННИ ДЕПУТАЧĔСЕН ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ТĂХХĂРМĔШ СЕССИНЕ ПУХАССИ ÇИНЧЕН

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн депутачĕсене çакăн çинчен пĕлтереççĕ: 1952 çулхи февралĕн 26-мĕшĕнче, ытларикун, каçхине 7 сехетре, ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн тăххăрмĕш сессийĕ (виççĕмĕш созыв) пухăнать.

Сессире çак ыйтăва пăхса тухмалла:

1. Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совет исполкомĕн 1951 çулхи ĕçĕсем çинчен тунă отчет.

Сесси пăрăвĕ ВКП(б) хула комитечĕн парткабинечĕн çуртĕнче пулать (Ленинградски урам, 1-мĕш çурт).

ĔÇÇЫННИ ДЕПУТАЧĔСЕН ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ИСПОЛКОМĔ.

Пĕлтерни

Февралĕн 22-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинетĕнче консультантсем валли И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи аграрнăй политика ыйтăвĕ пирки» ятлă произведенийĕ тăрăх лекци пулать. Лекцие ялхуçалăх институчĕн преподавателĕ А. З. Орденко вулать.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Ыран, февралĕн 23-мĕшĕнче, вырăсла спектакль

«МОЛОДОЙ ЧЕЛОВЕК»

Спектакль каçхине 20 сехетре пуçланать.

„Родина“ кинотеатрта

Паян, февралĕн 22-мĕшĕнче,

«СТАЛИНГРАДСКАЯ БИТВА»

Сеанссем 12, 14, 16, 18.15, 20, 22 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00627. Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20,000 экз.